К 83.8
В19
29352 чув

Н. ВАСИЛЬЕВ

# ЫТАРЛĂХ



Национальная библиотека ЧР
4-029352

29352-чув

Возвратите книгу не позже
обозначенного здесь срока

Зак. 3541.

КФ К 83.8 В19

## Николай Васильев

# ЫТАРЛĂХ

## ытарлă ыйтусем



КФ

ШУПАШКАР
ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
1985

83.8

ББК 84.Чув 7
В 19

8Ю(чув)

ПРОВЕРЕНО
20 10

29352-чув

им. М. Горького

**Васильев Н. В.**

В 19 Ытарлăх. Ытарлă ыйтусем.— Шупашкар. Чăваш кĕнеке издательстви. 1985.— 128 с.

Кĕнекене тĕрлĕрен ытарлă ыйтусем, викторинăсем, кроссвордсемпе чайнвордсем т. ыт. те кĕртнĕ. Вĕсем ачасен тавçăрулăхне аталантарма, тавракурăмне анлăлатма пулăшаççĕ.

30 п., 9000 экз.

**ББК 84.Чув 7**

**В $\frac{4803010200-143}{М 136 (03)-85}$ 92 — 85**

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1985 ç.

## АВТОРТАН

Акă сирĕн умăрта çĕнĕ кĕнеке. Ăна автор «Ытарлăх» тесе ят панă. Çак ăнлава нумай тĕрлĕ урăхлатса калама та май пур. Сăмахран: кăсăк ыйтусем, кулăшла ыйтусем, тавлă ыйтусем, шӳтлĕ ыйтусем, ытарлă ыйтусем тата ытти те. Малтанах паллă: мĕнле те пулин ыйту пур пулсан, унăн отвечĕ те пулма тивĕç. Çапла вара, çак кĕнекере тĕрлĕрен ыйтусемпе ответсем пулмалла. Анчах та мĕнлерех ыйтусем-ха вĕсем, эпир паллашас ыйтусем?

Ваттисен йăлипе, калаçăва катаран пуçлăпăр. Кирек мĕнле калаçура та каласа парассипе ыйтса пĕлесси пур, урăхларах каласан, кулленхи пурнăçра ыйтусемпе ответсенчен нимле майпа та пăрăнса иртме çук. Çынпа çын тĕл пулсанах ыйту хыççăн ыйту тăкăлма тытăнать.

— Аван-и?.. Ăçта кайрăн?.. Мĕн турăн?..

Кун пек ыйтусене кулленхи е ĕçлĕ ыйту тейĕпĕр. Асталăх тата вĕренӳ ыйтăвĕсене те çав шутах кĕртĕпĕр. Тата мĕнле ыйтусем пур? Вĕренекенсем хушшинче анлă сарăлнă ыйтусем — викторинăсем. Мĕнсем-ши вĕсем?

Викторинăсем тесе пĕр-пĕр темăпа çыхăннă ыйтусемпе ответсен вăййине калаççĕ. Радиопа та, телевизорпа та тĕрлĕрен викторинăсем нумай параççĕ. «Ăçта? Мĕн? Хăçан?» тата «КВН» текен передачăсем те çак шутах кĕреççĕ.

Кроссвордсемпе чайнвордсем те, анлăрах илсе пăхсан, викторинăсене çывăх, мĕншĕн тесен кусем те, лешсем те информацилле ыйтусенчен тăраççĕ.

Туптарусем те (сутмалли е тупмалли юмахсем) эпир пăхса тухас ыйтусене çывăх. Çывăх кăна та мар, ытарлăхсем е ытарлă ыйтусем туптарусен хăйне уйрăм пайĕ тесен те юрать. Ĕлĕкрех вĕсене пĕрлех пуçтарнă, пĕрлех пичетлесе кăларнă. Малтанхи вăхăтсенче туптарусем яланах ыйтуллă сăмахпа вĕçленнĕ пулмалла та, каярах çав ыйтуллă сăмахсем çухалса пынă. Туптарусен тупсăмне тупакан та ответленĕ чухне хăйĕн хуравне çав ыйтуллă сăмахпах пуçланă: «Аслăк çинче лаша кĕ-çенет — мĕн вăл?— Вăл та пулин Аслати».

Чăнах та, мĕн-ха вăл ытарлăх? Мĕн-ха вăл ытарлă ыйту?

Ытарлăх тесе тавçăрулăха аталантарас тĕллевпе ха-тĕрленĕ е тата мĕнле те пулин пытарăнчăк шухăшпа çыхăннă ыйтупа ответа калаççĕ.

Халăх хушшинче çакăн пек хайла пур: «Ытарлă сă-махăн шухăшĕ пытарлă». Апла пулсан, «ытарлăх» тени çĕнĕ сăмах мар иккен, вăл калаçу чĕлхинче тахçанах пулнăскер-мĕн. Çапла, калаçу чĕлхинче ытарлă сăмах-па усă курасси тахçанах йăлана кĕнĕ, вăй илсе çирĕп-леннĕ. Вĕсем, пурнăçпа çыхăннă ытарлăхсем, пĕр вĕçĕм аталанса, пуянланса тата çĕнелсе пынă, халăхăн сăмах халлĕн çӳрекен пултарулăхĕнче хăйне уйрăм жанр пул-са кайнă. Чăваш фольклорĕнче, ытти халăх фолькло-рĕнчи пекех, ытарлă сăмах тĕслĕхĕсем питех те нумай. Эпир вĕсемпе кулленхи пурнăçра анлăн усă куратпăр. Пĕтĕмлетсе каласан, халăх вăл ытарлă калаçма юра-тать, халăх чĕлхи ытарлăхпа пуян.

Каланă шухăша çакăн пек тĕслĕхпе çирĕплетсе пама пулать. Авалхи асаннесем-асаттесем кушак умĕнче «шăши» тесе калама хушман. Ун пек табу * йĕркине пăсса калаçас пулсан, кушак шăши тытма пачах пăра-хать тенĕ е шăшисем мĕн çинчен калаçнине ăнланса кушакран пытанма ĕлкĕреççĕ тенĕ. Çавăнпа та «шăши» тесе калас вырăнне «авăн кайăкĕ» е «кушак кайăкĕ»

---

* Табу — пĕр-пĕр япалапа усă курма е сăмах калама чарни.

тесе каламалла пулнӑ. Ҫак тӗслӗхри «авӑн кайӑкӗ» тата «кушак кайӑкӗ» тенисем шӑп кӑна ытарлӑ сӑмахсем пулаҫҫӗ те. Ҫакна палӑртнӑ хыҫҫӑн ытарлӑ сӑмахран ытарлӑ ыйту ҫине куҫасси те йывӑрах мар.

— Кушак кайӑкӗ мӗнле чӗрчун?

— Шӑши.

Кун пек каланине «ытарлӑх» е «ытарлӑ ыйту» тетпӗр.

Ку, паллах, питех те ансат тӗслӗх. Ҫак кӗнекере ҫакнашкал ансат тӗслӗхсем те пур, мӗншӗн тесен вулакансен йышӗ те пӗр пек мар. Кун пек кӗнекене аслӑрах классенче вӗренекенсем те, кӗҫӗннисем те хаваспах вулаҫҫӗ. Мӑн ҫынсем те, пушӑ вӑхӑт тупӑнсан, ҫак ӗҫпе айкашма хирӗҫ мар.

Тепӗр тӗслӗх пӑхса тухӑпӑр:

— Ватӑ йӑмра ма хӑрать?

Кунта «ватӑ» тенӗ сӑмах — ултав сӑмахӗ, вӑл шухӑша урӑх еннелле пӑрса яма кӑна ҫак пуплеве вырнаҫнӑ. Каласу «йӑмра» сӑмах ҫинчен те пымасть, каласури тӗп ыйту — йывӑҫ ма хӑрать? Ҫак сӑмахӑн пӑтӑрмахӗ пур иккен. «Хӑрать» тенине икӗ тӗрлӗ те ӑнланма пулать-мӗн: хӑрать — йывӑҫ типсе ларать, хӑрать — шикленме тытӑнать. Икӗ явапран хӑшне суйласа илмелле? Ыйтуҫӑ хӑшне тӗпе хурса шахвӑртать? Тем тесен те, ыйтуҫӑ ватӑ йӑмра хӑрни ҫинчен ыйтмасть. Апла пулсан кунта сӑмахӑн тепӗр пӗлтерӗшӗпе усӑ курас пулать: Ватӑ йӑмра мӗнрен шикленет? Ответ: Ватӑ йӑмра чӗрӗ чун мар, вӑл хӑрама пӗлмест.

Халь мӗн каланине пӗтӗмлетсе пӑхӑпӑр.

Ытарлӑхсем е ытарлӑ ыйтусем тума виҫӗ услови кирлӗ:

1. Ытарлӑх е ытарлӑ ыйту тума предложенире ыйту сӑмахӗ пулмалла.

2. Ытарлӑ ыйтура мӗнле те пулин вӑлтса калани е пытарлӑ шухӑш пулмалла.

3. Ытарлӑ сӑмахра мӗнле те пулин кӑсӑклӑх е кӗтмен ҫӗртен сиксе тухакан тӗлӗнтермӗш пулмалла.

Çак условисене тивĕçтерекен ыйтуллă предложенисем пурте ытарлăх шутне е ытарлă ыйтусен шутне кĕме пултараççĕ; анаграммăсем, логогрифсем, метаграммăсем тата тĕрлĕрен пуçватмăшсем.

Ӳкерчĕксем ытарлăх пулма пултараççĕ-и?

Паллах, ӳкерчĕксем те ытарлăх пулма пултараççĕ. Унтан та ытларах, хăш те пĕр ытарлăхсене хут çине çырмасăр е хут çине ӳкерсе кăтартмасăр ăнланма та çук, вĕсемпе усă курма та май килмест.

Çак кĕнекере çĕнĕ сăмахсем те курăнкалаççĕ. Тĕслĕхрен:

— «Вĕри курăк» мĕнле ӳсенлĕх? (Вĕлтĕрен.)

Кунта «ӳсентăран» тесе калас вырăнне çĕнĕлле термин туса «ӳсенлĕх» тенĕ. Çапла калани витĕмлĕрех те, илемлĕрех те, тĕрĕсрех те. Вырăнлă сăмах!

Авалхи грексен пĕр ăславçи: «Ачасене ыйту пама вĕрентесси питех те кирлĕ ĕç, çавна пĕлекен ачасем хăйсем тĕллĕн ĕçлеме те пултараççĕ»,— тенĕ. Питĕ паха сăмахсем. Ман вара çак сăмахсене кăштах урăхлатса çапларах калас килет: «Ытарлă ыйтусем тума пĕлесси — усăллă ĕç, вăл литературăпа тăван челхене хаклама, унăн иксĕлми пуянлăхĕпе вырăнлă та кирлĕ пек усă курма хăнăхтарать. Кунта çакна та асăрхаттарас пулать. Çĕнĕ ытарлăх малтанлăха питĕ хитре пек туйăнма пултарать, анчах та вăл, пур енчен те пиçсех çитеймен пулсан, пĕрремĕш тĕрĕслеврех пăрахăça тухать. Ытарлăх вăл пурин кăмăлне çырлахтарсан кăна нумай хысаллă бриллиант пек илемлĕн йăлтăртатса чуна илĕртме е савăнтарма пултарать».

Тата тепĕр кирлĕлĕх çинче чарăнса тăрсан та юрать пулĕ. Ку вăл — ытарлă ыйтусем çине ответсем тупса парасси, тепĕр тĕрлĕрех каласан — ытарлăн явапласси. Мĕнле те пулин ытарлăхпа çын умĕнче усă курас умĕн çав ыйту явапĕпе тĕплĕн паллашас пулать, пулас хирĕçлевсем çинчен шухăшласа пăхни те сиенлĕ мар.

Автор кĕнекери ытарлă ыйтусене туллин ответлеме тăрăшнă, мĕншĕн тесен кĕçĕнрех ачасем е çакăн йыш-

ши ытарлăхсемпе пĕрремĕш хут тĕл пулакансем кĕскен каланине тӳрех тавçăрса илеймеççĕ. Унсăр пуçне, ашшĕ-амăшсен те ачасене нумай сăмахлăн тата тĕплĕн ăнлантарса пама тивет.

## ЫТАРЛĂ ЫЙТУСЕН ВĂЙИИ

1. Ытарлăх вăййи — сăмах вăййи, çавăнпа та вăл сăмах вылятнине юрататъ.

2. Вăйă тĕллевĕ — тăван чĕлхе пуянлăхĕпе усă курса ытарлă калаçма вĕренесси.

3. Ытарлăх вăййине йышпа та, пĕччен-иккĕн те выляма юрать.

4. Вылякансем ылмашăнма та пултараççĕ: ыйтуçăявапçă, явапçă-ыйтуçă пулать.

5. Вăйă вăхăтĕнче мĕнле те пулин тавлашу сиксе тухсан, чĕрре кĕрсе харкашма кирлĕ мар, аслăраххисем пулăшнипе татса памалла.

6. Вылявра кам витĕмлĕрех те тĕплĕнрех, тĕрĕсрех те туллинрех, кулăшларах та шӳтлерех хуравлать — çав çĕнтерет.

7. Вылякансен ăсталăхĕпе пултарулăхне «очко» лартса хакламалла. Очкосем: çурма ответ — çур очко, тулли ответ — пĕр очко, çĕнĕлĕх — виçĕ очко.

8. Вылявçăсен хушшинче тӳрккеслĕх пулмалла мар, тӳрккессĕн шӳтлекен вăйăран тухса ӳкет.

# А

## АВТАНСЕМ
### (Ансат ыйту)



Ҫакӑ ватӑ автансен
Ҫапӑҫмалла хӑҫанччен?

## АВАЛХИ — ЁЛӖКХИ
### (Ытарлӑх)

**1.** Аваллӑх ашшӗ кам? **2.** Аваллӑх килне мӗн теҫҫӗ? **3.** Аваллӑх управҫи мӗн ятлӑ? **4.** Авалхи ҫын ӑҫта пурӑннӑ? **5.** Авалхи туссене ӑҫта курма пулать? **6.** Авалхи хулара камсем пулса кураҫҫӗ? **7.** Вунвиҫҫӗмӗш ӗмӗрте Атӑл хӗрринче пурӑнакан чӑвашсем мӗнле пулӑ тытнӑ-ши? **8.** Ёлӗк тени мӗнле сӑмаха ҫаврӑнма пултарать? **9.** Мамонт ӑҫта пурӑнать? **10.** Мӗнле вӗҫен кайӑка чи авалхи теме юрать? **11.** Мӗнле ӳсенлӗхе чи авалхи тесе шутлаҫҫӗ? **12.** 1812 ҫулта чи пысӑк шлепке кам тӑхӑнса ҫӳренӗ? **13.** Ҫӗр ҫул каялла, февраль уйӑхӗн 30-мӗш числинче, мӗнле пысӑк ӗҫ пулса иртнӗ? **14.** Тамерланпа Уксах Тимӗр тӗл пулма пултарнӑ-и? **15.** Ыл-

тăн ĕмĕр хăçан пулнă? **16.** Этемĕн чи авалхи тусĕ кам пулнă? **17.** Яланхи кил мĕн ятлă?

## АВТАН — ҪĂРҪКА
### (Ытарлăх)

**1.** Автан ма нумай хут авăтать? **2.** Автан мĕншĕн авăтать? **3.** Автан хăçан хур курать? **4.** Автан хӳри мĕншĕн авăк? **5.** Ҫамăн, кавалерист пулмасан та, урисенче шпорсем пур? **6.** Ҫамăн пуçĕ çинче тура пур? **7.** Ҫамăн сăмси ярапаллă? **8.** Ҫамăн ури качаллă? **9.** Ҫамăн хӳри çинче çурласем пулаççĕ? **10.** Ҫăвакал мĕншĕн шывра ишет? **11.** Ҫăвакал хăçан хур пулать? **12.** Ҫăрҫка мĕнле тĕсе килĕштермест? **13.** Ҫăрҫкасен çуралнă çĕршывĕ ăçтарах? **14.** Ҫăрҫкасен çывăх хурăнташĕ кам пулать? **15.** Ҫăрҫка умĕнче мĕн пур? **16.** Мĕнле автан пыл пек тутлă? **17.** Мĕнле килкайăкĕн икĕ тĕрлĕ ят? **18.** «Мускавра чăх сăваççĕ» тесе калаçнине илтме пулать, анчах та Мускавра чăхсене мĕнлерех сăваççĕ-ши? **19.** Пăшал çумĕнче мĕнле килкайăкĕ пур? **20.** Ҫăмарта тунă чăх мĕншĕн кăтăклать? **21.** Ҫĕвĕсĕр пичке мĕн ятлă? **22.** Хура чăх çăмарти мĕншĕн шурă? **23.** Хур таврашне мĕн хурлăх? **24.** Шухă автан пуласси ăçтан паллă? **25.** Ылтăн автан ăçта пурăнать? **26.** Ял сехечĕ мĕн ятлă?

## АПАТ-ҪИМĔҪ
### (Ытарлăх)

**1.** Абрикоса мĕнле çиеççĕ? **2.** Автан тукмакне мĕнсĕр çиме çук? **3.** Апат хăçан тутлă? **4.** Апат çиме ларсан кам аслă? **5.** Вĕретнĕ шыв ĕçме мĕн кирлĕ? **6.** Вĕри чей мĕн пирки пĕçерет? **7.** Ҫавлемесĕр мĕн çиеççĕ? **8.** Ҫуçран пăхса мĕн çинине пĕлме пулать? **9.** Лимон

таврашне хăçан çиме пулать? **10.** Мĕнле апата пуçа хываççĕ? **11.** Мĕнле кĕрперен пăтă пĕçерме май килмест? **12.** Мĕнле пăтта вăрттăн пĕçерессĕ? **13.** Мĕнле тирĕкрен апат çиме çук? **14.** Мĕн çинине сăмсапа çăмăлах туятăн? **15.** Сĕтпе çуран хăшĕ аслăрах? **16.** Çавра çăмартан мĕскер çук? **17.** Çăкăр аслă-и, тăвар аслă-и? **18.** Çăкăр мĕнсĕр пулмасть? **19.** Тинкĕле тыррине мĕн теççĕ? **20.** Уçласа тунă çимĕç мĕн пулать? **21.** Хăмла çырлине хăçан çиеççĕ? **22.** Чĕрчун çумне местоимени хушсан мĕнле çимĕç пулать? **23.** Ыхра çумĕнче мĕн йывăр? **24.** Яшка мĕншĕн пăсланать?

## АЙВАН ЫЙТУ
## (Шӳт)



Айван ыйтать пит вирлĕ:
— Арбуз çиме мĕн кирлĕ?

# АКТИВЛĂ ҪАНУ
## (Буквограмма)



Аслă вырăс халăхĕн паллă физиологĕ И. П. Павлов активлă кану ҫинчен мĕн каланине еплерех майпа вуласа пĕлмелле-ши?

## А. С. ПУШКИН СӐВВИСЕМ
### (Викторина)

Вырӑс поэзийӗн хӗвелӗ А. С. Пушкин ҫырнӑ мӗнле произведенисенчен илнӗ-ши аяларах ҫырса кӑтартнӑ йӗркесене?

1. Асапӑр каймӗ харама,
Хӑватлӑ шухӑшӑр ҫухалмӗ.

2. Вӑхӑт тек хӑвалать лашисене.

3. Вӗсем асилеҫҫӗ иртсе кайнине,
Пӗрле тӑшмана еплерех хирнине.

4. Ма эс, утҫӑм, кӗҫенетӗн,
Мӗншӗн пӗкрӗн-ха пуҫна,
Ҫилхӳне тем вӗҫтерместӗн,
Ма ҫыртман ҫӑварлӑхна?

5. Поэт, хӗрӳ сӑмахпала
Ҫунтар этемӗн чӗрине.

6. Пур аслӑ Русь тӑрӑх
Ман ятӑм чаплӑ пулӗ,
Пур чӗлхепе те асӑнӗҫ мана унта...

7. Пур халӑха та ирӗк парӑр,
Телейлӗх кӳрӗр ҫӗр ҫине.

8. Сӗм аваллӑх ӗҫӗсем,
Иртнӗ кун юмаххисем.

9. Ҫамрӑкран чысна упра.

10. Хӑрушӑ уйрӑлу саманчӗ
Чуна виҫесӗр ҫунтарать.

11. Пуян та чаплӑ Кочубей.

# А. С. ПУШКИН ĂСЛĂХĔ
(Буквограмма)




Çак çаврашка çинче вырăссен аслă поэчĕ А. С. Пушкин каланă мĕнле сăмахсем вуланмалла?

# Ă

## ĂСЛĂ СĂМАХ
**(В. И. Ленин сăмахĕ)**




Çак ӳкерчĕк çинче пĕтĕм тĕнчери ĕçхалăх çулпуçĕ В. И. Ленин каланă ăслă сăмахсене вулама пулать. Мĕнле сăмахсем-ши вĕсем?

## ĂСЛĂХ — ПĔЛӲ
**(Ытарлăх)**

**1.** Авалхи авторучка мĕн ятлă пулнă? **2.** Авалхи çынсем мĕнле шкулта вĕреннĕ? **3.** Ăслăх килĕ тесе мĕне калаççĕ? **4.** «Ăс хуранĕ» мĕн тени пулать? **5.** Вĕренмел-

ли кĕнекене мĕнле çыраççĕ? **6.** Венгрла çырнă кĕнекене мĕнле вуламалла? **7.** Глобус мĕншĕн çавăрнать? **8.** Каласма пĕлмесĕр кам вĕрентет? **9.** Никам пурăнман çуртсене ăçта курма пулать? **10.** Пуласлăха мĕн курать? **11.** Саспаллисен йĕркине мĕн теççĕ? **12.** Çĕр макечĕ мĕн ятлă? **13.** Çĕр çинче мĕнле ункă чи пысăкки шутланать? **14.** Тĕрлĕрен чĕлхепе кам калаçать? **15.** Урок мĕнле пуçланать? **16.** Урок умĕнче мĕн илтĕнет? **17.** Францире пурăнакан чех мĕнле чĕлхепе калаçать? **18.** Халăхсăр хуласене ăçта курма пулать? **19.** Хут çинчи нотăсене мĕнле вуламалла? **20.** Чăвашсен ĕлĕк мĕншĕн кĕнеки пулман? **21.** «Шарада» тенĕ сăмах мĕнле вуланать? **22.** Шкул ачи хăçан хӳреллĕ пулать? **23.** Шкул ачисен ĕç сĕтелĕ мĕн ятлă? **24.** Ятсăр хуласемпе шывсем ăçта пулаççĕ?

## ĂÇТА ВĔСЕМ?
### (Авалхи ыйту)



Ăсчахсем пĕрре çухалнă,
Ăçтарах вĕсем пытаннă?



Б И Б Л И О Т Е К А
им. М. Горького

## ĂСЛĂ СĂМАХ
## (Карл Маркс сăмахĕ)



Мускавра Карл Маркс палăкĕ пур. Ун пьедесталĕ çине пурне те паллă сăмахсем çырса хунă. Мĕнле сăмахсем-ши вĕсем?

# В

## ВĂХĂТ — ВИÇЕ
## (Ытарлăх)

**1.** Аршăнта миçе шит? **2.** Вăхăт виçине мĕн теççĕ? **3.** Вăхăт хуралçи мĕнле вĕçен кайăк? **4.** Виçĕ шăрпăк пĕрчинчен пĕрне те хуçмасăр мĕнле майпа тăваттă туса хумалла-ши? **5.** Вырăнтан хускалмасăр мĕн шăвать? **6.** Декабрь вĕçĕнче мĕн пулать? **7.** Камăн кĕтсе тăрас йăли çук? **8.** «Катăк уйăх» тесе мĕнле уйăха калаççĕ? **9.** Иртнĕ кунăн мĕнĕ çук? **10.** Кĕнеке-хаçат вулама мĕн кирлĕ? **11.** Малти кунсем нумай-и, кайри кунсем нумай-и? **12.** Мĕнле вăхăт час иртет? **13.** Мĕнле саспалли виçе ятне куçма пултарать? **14.** Мĕнле сехет талăкра икĕ хутчен кăна тĕрĕс вăхăт кăтартать? **15.** Мĕнле хисеп кутăнла та, пуçăнла та хăйĕн шутне çухатмасть? **16.** Мĕнле хисепре саспаллисемпе цифрăсен шучĕ пĕр пекех? **17.** Мĕн çухалсан тупăнмасть? **18.** Миçе çумне миçе хушсан миçе пулать? **19.** «Нуктамăш» мĕн тени пулать-ши? **20.** Пĕр пăт хăмла йывăр-и, пĕр пăт тимĕр йывăр-и? **21.** Пилĕк мăшăр мĕн пулать? **22.** Çуллахи вăхăта кам пуçлать? **23.** Çулталăкри чи кĕске уйăх мĕн ятлă? **24.** Çурхи вăхăта кам пуçлать? **25.** Çут тĕнчере мĕн ватă? **26.** Çухрăм мĕнле пуçланать? **27.** Талăк миçе сăмахран тăрать? **28.** Уйăх мĕнпе пуçланать? **29.** Уйăх хăçан катăлать? **30.** Хак виçине мĕн теççĕ? **31.** Хăçан вăхăт хакланать? **32.** Час иртекен вăхăт мĕн ятлă? **33.** Ыйхăран вăратма мĕн ăста? **34.** Ыранхи кун мĕнле пуçланать? **35.** Эрнекунпа шăматкун хушшинче мĕн пулма пултарать? **36.** Эрне хушшинче миçе эрнекун тесе пĕлеççĕ? **37.** Этем ĕмĕрне миçе тапхăра пайлаççĕ? **38.** Яланхи сехет мĕн ятлă?

29352-чв



Чувашская Республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. Горького

# ВĂЛТАЙ ПУРККИ
## (Шӳт)



Вăлтай Пуркки пĕр илемлĕ ирхине шуçăмлах тăрать те Атăл йӳппине пулă тытма анать. Пĕлесчĕ, мĕнле пулăсем тытма пултарать-ши çак ача?

## ВĂЛТА — ПУЛĂ
### (Ытарлăх)

**1.** Авалхи пулă мĕн ятлă? **2.** Вăлта вĕçĕнче мĕн пулать? **3.** Вĕтĕ пулăсене мĕн теççĕ? **4.** Камăн тумĕ нух-

* Нухрат — авалхи пĕчĕк те çӳхе укçа. Ăна тухъя-хушпу çинче курма пулать.

ратлă *? **5.** Ķарас пуллăн çывăх тăванĕ мĕн ятлă? **6.** «Ķаска пулă» тесе чăвашсем мĕнле чĕрчуна каланă? **7.** Кĕмĕл вăлтапа ăçта пулă тытаççĕ? **8.** Ķуç хупмасăр çывăракан пулăсем пур-и? **9.** Ķуштан пулă тесе мĕнле пулла калаççĕ-ши? **10.** Мĕнле пулă вăрăм усси çитĕнтерет? **11 .** Мĕнле шывра пачах та пулăсем пурăнмаççĕ? **12.** Пĕве пулли тесе мĕнле чĕрчуна калаççĕ? **13.** Пĕчĕк йышши пулăсем ăçтарах пурăнаççĕ? **14.** Пулă тытма мĕн кирлĕ? **15.** «Пулене пулли» тесе мĕнле пулла калаççĕ халăхра? **16.** Çăрттан мĕскер урăхла? **17.** Чăн пысăк пулă мĕн ятлă? **18.** Шапа хăçан пулă пулма пултарать? **19.** Шыва хирĕç мĕнле пулă ишет? **20.** Ылтăн пулăсем ăçта пурăнаççĕ? **21.** Юханшывра мĕнле пулă пурăнмасть? **22.** Япони пулли мĕн ятлă? **23.** Мĕнле пулăсем măйăхлă? **24.** Партас пулă мĕнпе ытарлă? **25.** Пулă мĕншĕн пусĕнчен çĕрет?

## ВĂЙЛĂ ВĂКĂР
## (Шӳт)



Вăйлă теççĕ вăкăра,
Вăкăр çилли ма кăра?

# ВĂХĂТ ВАХТЕРĔ *
## (Задача)




Халь сиртен ыйтас килет:
Хăçан тĕрĕс çак сехет?

# В. И. ЛЕНИН УСĂ ĶУРНĂ
## (Викторина)

Аслă çулпуçăмăр В. И. Ленин ăслă сăмахсене, вăлтса каланисене, ытарлă сăмах таврашне, юптарса каланисене питĕ килĕштернĕ. Вăл авалхи мифологи тĕслĕхĕсемпе те, вырăс тата ытти халăх хушшинче çӳрекен сăмах-юмахсемпе те вăхăтлă, виçеллĕ тата вырăнлă усă курма пĕлнĕ. Уйрăммăнах вырăс тата ют çĕршыв писателĕсен паха сăмахĕсемпе хăйĕн ĕçĕсенче питĕ нумай усă курни такама та тĕлĕнтерет. А. Цейтлин çырса кăларнă «Ленинăн литературăллă цитатисем» ятлă кĕнекинче пĕлтернĕ тăрăх В. И. Ленин афоризмла сăмахсемпе 925 хут усă курнă. Унăн ĕçĕсенче М. Е. Салтыков-Щедрин сăмахĕсем — 320 хут, Н. В. Гоголь сăма-

* Вахтер — сыхчă, хуралçă.

хĕсем — 99 хут, А. С. Грибоедов сăмахĕсем — 64 хут, И. А. Крылов сăмахĕсем — 60 хут, И. С. Тургенев сăмахĕсем — 46 хут, А. С. Пушкин сăмахĕсем — 19 хут тĕл пулаççĕ.

Вулакансем, сирĕн хушăра нумай вуланă, нумай сăмах-юмах илтнĕ çынсем те сахал мар ĕнтĕ, сиртен хăшпĕрисем чăннипех те эрудитсем * шутланаççĕ. Эсир В. И. Ленин усă курнă И. А. Крылов асаттен хăш те пĕр сăмахĕсене е юптару ячĕсене аса илейместĕр-ши? (Ку çăмăл ыйту мар, çапах та ансат ыйтусемпе пĕрлех йывăр та кăткăс ыйтусем те пулма кирлĕ. Питех пĕлеймесен те тем мар — ответ çине пăхса илме пулать.)

## ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ
## (Ытарлăх)

**1.** Акатуй лаши мĕнрен иртеймест? **2.** Анчăкра мĕн пур тесе пĕлеççĕ? **3.** Анчăкпа йытăран хăшĕ маларах? **4.** Апат çинĕ чухне кушак ма мăрлатать? **5.** Ача лаши мĕн ятлă? **6.** Ашак мĕншĕн утă купи патне утса пырать? **7.** Ашак пуçĕнче мĕн пур? **8.** Ашак хăçан алăк çумĕнче пулать? **9.** Ашак хăçан ял ятне çаврăнма пултарать? **10.** Ашă вырăн хуралçи мĕн ятлă? **11.** Ватă выльăх тесе мĕнле чĕрчуна калаççĕ? **12.** Вĕтĕ йышши лашасене мĕн теççĕ? **13.** Выртнă лаша мĕнле тăрать? **14.** Ĕне мĕншĕн выртать? **15.** Ĕне пуçĕнче мĕскер пур? **16.** Ĕне сĕтне мĕншĕн ĕçеççĕ? **17.** Ĕне сĕчĕ ăçта теççĕ чăвашсем? **18.** Иккĕмĕш çулхи тихана мĕн теççĕ? **19.** Кам майăхлă çуралать? **20.** Кам урипе пит çăвать? **21.** Каскăн выльăх мĕнле чĕрчун? **22.** Качака çичĕ çул пурăннă хыççăн мĕн тăвать? **23.** Кĕтӳ пуçĕ тесе мĕнле выльăха калаççĕ? **24.** Килти тигр тесе мĕнле чĕрчуна калаççĕ? **25.** Колхоз

---

* Эрудит — калаçу ăсти, нумай пĕлекен.

ёнисене мёншён сăваççĕ? **26.** Купăста çине кам куç хывма пит ăста? **27.** Кушак мĕншĕн апат çинĕ хыççăн тин питне çăвать? **28.** Кушак хăçан арçын ятне улшăнать? **29.** Лаша какайне ăçта курма пулать? **30.** Лаша çумĕнче мĕн ватă? **31.** Лаша хăçан ултă ураллă пулать? **32.** Лаша хăçан утă çиет? **33.** Мĕнле лаша вĕçме пултарать? **34.** Мĕнле лаша кĕçенме пĕлмест? **35.** Мĕнле лаша час тарлать? **36.** Мĕнле сурăх кашкăртан хăрамасть? **37.** Мĕнле сурăх пӳрте кĕрсен çухалать? **38.** Сысна мĕншĕн йăнăшать? **39.** Сысна чирĕ мĕн ятлă? **40.** Ут тени хăçан хăйĕнчен çĕр-пин хут пысăкрах пулма пултарать? **41.** Хăйма вăрлама кам хăюллă? **42.** Хура кушака хăш вăхăтра пӳрте кĕме çăмăлтарах? **43.** Чухăн çын ёни тесе мĕнле выльăха каланă? **44.** Юрлă çын юр-варĕ мĕнле çимĕç пулнă? **45.** Ял каскăнĕ тесе мĕнле выльăха ятлаççĕ? **46.** Янавар тесе мĕнле выльăха калаççĕ? **47.** Мăйăхлă кахал тесе кама калаççĕ? **48.** Мĕнле кушак метр çурă тăсăлма пултарать? **49.** Мĕнле кушак çумра çӳрет? **50.** Мĕнле тăрать вырт- нă ёне?

## ИЛЕМЛӖ ЛИТЕРАТУРА
### (Викторина)

**1.** Авалхи грексен легендарлă çыравçи кам пулнă? **2.** Виктор Гюго мĕнле сакăр пьеса çырнă? **3.** Виçĕ пичĕке çинчен камăн сатирăллă юмах пур? **4.** «Итали Мольерĕ» тесе кама калаççĕ? **5.** Кам тата мĕнле произведенире çил арманĕсемпе çапăçать? **6.** Кам-ши «Кĕлпике» юмахăн авторĕ? **7.** Марк Твен ятне, ашшĕ ятне тата вăрттăн хушаматне калама пултаратăр-и? **8.** Мĕнле писателе «сатира улăпĕ» тесе хисеплеççĕ? **9.** Мĕнле писателĕн икçĕре яхăн псевдоним пулнă? **10.** Мĕнле писатель историллĕ пьесăсем нумай çырнă? **11.** Мĕнле писатель историллĕ романсем нумай çырнă? **12.** Мĕнле пĕртăвансем юмахсем пухса çырса чапа тухнă? **13.** Мĕнле писатель çирĕм томран тăракан романсен серине çырнă? **14.** Мĕнле писатель çырнă пĕтĕм произведенисен хисепĕ 277 тома çитет? **15.** Мĕнле писатель, хăй пурăннă хуларан тухса çӳремесĕрех, çулçӳревçĕсем çинчен питĕ нумай произведени çырма пултарнă? **16.** Мĕнле писательница арçын хушаматне хăйĕн псевдонимĕ тунă? **17.** Мĕнле писатель юрăсемпе куплетсем çырса чапа тухнă? **18.** Пĕтĕм тĕнче пĕлекен гимн-юрра (парти гимнне) кам çырнă? **19.** Пĕчĕк çынсемпе пысăк çынсем çинчен кам тата мĕнле произведени çырнă? **20.** Франци писателĕн Стендалĕн тĕп ячĕпе хушамачĕ мĕнле-ши? **21.** Хăйне палăк лартасси çинчен кам пуçласа сăвă çырнă? **22.** Юптаруçăсем камăн чĕлхипе усă кураççĕ? **23.** «Юптаруçă аслашшĕ» тесе кама хисеплесе калаççĕ? **24.** Ют çĕршыв писателĕсенчен камăн произведенийĕнче чикан хĕрĕ Эсмеральда çинчен çырни пур? **25.** Ятарлă юмах çыравçисене камсене пĕлетĕр?

## И. Ф. ГЕТЕ СĂМАХĔ
### (Пуçватмăш)




Çак çаврашкасем ăшĕнче — саспаллисем, саспаллисем йĕрсен çулĕпе пĕрлешес пулсан — И. Ф. Гёте сăмахĕсем вуланмалла. Мĕнле сăмахсем-ши вĕсем?

# Й

## ЙĂНĂШСЕМ
(Задача)

Аяларах илсе кăтартнă предложенисенче кашнинчех йăнăшпа кĕрсе кайнă сăмахсем пур. Мĕнле сăмахсемши вĕсем?

1. Африкăра çакăн пек чĕрчунсем пурăнаççĕ: антилопа, арăслан, бегемот, крокодил, носорог, тигр, ягуар. 2. Вунсаккăрмĕшпе вунтăххăрмĕш ĕмĕрсенче пурăннă вырăс писателĕсем: А. В. Кольцов, А. Н. Островский, А. С. Грибоедов, А. С. Пушкин, И. А. Крылов, Қ. П. Прутков, М. Ю. Лермонтов, Н. А. Некрасов. 3. Қаспи кӳллинче (тинĕсĕнче) çакăн пек пулăсем пурăнаççĕ: акула, вобла, камбала, судак, çеврĕк, треска, шурă пулă. 4. Кĕрхи сивĕсем пуçлансан çак вĕçен кайăксем кăнтăр еннелле вĕçсе каяççĕ: акăш, ăсан, карăш, кăсăя, пăрчăкан, чарлак, чарлан, шăнкăрч. 5. Лăсăллă йывăççен шутне çаксем кĕреççĕ:: каврăç, катăркас, кедр, пихта, уртăш, хыр, чăрăш. 6. Металсем тесе çаксене калаççĕ: алюмини, азот, кĕмĕл, пăхăр, платина, тăхлан, хурçă, ылтăн. 7. Пирĕн енче çак чĕрчунсем пурăнаççĕ: арлан, ашак, кашкăр, лама, мулкач, пăши, пурăш, тилĕ, упа. 8. Çăва тухсан çакăн пек сĕрлĕхсене (хурт-кăпшанкăсене) курма пулать: вăрăмтуна, вĕршĕн, йĕпвăрри, лĕпĕш, нăрă, пăван, ӳпре, шӳшĕлкке (жужелица). 9. Çĕр чăмăрĕ çинче çакăн пек материксем пур: Австрали, Антарктида, Африка, Гренланди, Еврази (Европăпа Ази пĕрле), Қăнтăр Америка тата Çурçĕр Америка. 10. Улăх-çаран чечекĕсем çаксем пулаççĕ: аслати курăкĕ, кӳкĕрчен, ландыш, матрӳшке, пĕтнĕк, сарана, утмăлтурат тата шăпкан. 11. Япони халăхĕн юратнă чечекĕ: астра, левкой, пион, хризантема, ягель.

# ЙĂНĂШ ПУЛНИ
## (Задача)



Тинĕсре çил алхасать —
Қарапа хыçран хăвать.
Вăл ишет хумсем çинче
Қаркăç парăс айĕнче.

Художник А. С. Пушкинăн сăвăласа çырнă юмахĕ тăрăх ўкерчĕк тунă, анчах та çав ўкерчĕкре çутçанталăк саккунĕпе килĕшсех тăман йăнăш пур. Мĕнле йăнăш вăл?

# ЙЫВĂÇ ЙЫШĔ
## (Задача)




Çакăнта ӳкернĕ йывăççемпе тĕмсен ячĕсене, вĕсен уйрăм пайĕсем тăрăх палласа, аялти клеткăсем çине çырса хумалла. Çак ĕçе пуринчен маларах тата тĕрĕсрех кам тума пултарĕ?

## ЙЫВĂÇ — ÇУРĂК
## (Ытарлăх)

**1.** Арçын йывăççи мĕн ятлă? **2.** Ăвăс хăçан вуланма е çырăнма пултарать? **3.** Вăй виçме сĕнекен пĕрене мĕн ятлă? **4.** Вĕри курăк мĕнле ӳсенлĕх? **5.** Вушар йывăç ма çурăлмасть? **6.** Ешĕл ылтăн тени мĕн пулать? **7.** Йывăр йывăç мĕнле ӳсенлĕх? **8.** Камăнне пĕлсен мĕнле йывăç пулмалла? **9.** Кукăр саспалли мĕнле йывăç? **10.** Куршанакăн курăкне мĕн теççĕ? **11.** Кушак курăкĕ мĕнле ӳсенлĕх? **12.** Макăрту çимĕçне мĕн теççĕ? **13.** Мĕнле вутăн пачах та тĕтĕмĕ çук? **14.** Мĕнле йывăç çине кайăк ларса кураймасть? **15.** Мĕнле йывăç çинче урлă тир? **16.** Мĕнле хур йывăç пулма пултарать? **17.** Мĕнсĕр йывăç çулçă кăлармасть? **18.** Паллă йывăç мĕнле тĕмлĕх? **19.** Çулçӳрев курăкĕ мĕн ятлă? **20.** Çумăр çунă чухне мĕнле йывăç айне тăраççĕ? **21.** Çумçакки курăкне мĕн теççĕ? **22.** Тăлăх арăм курăкĕ мĕн-ши вăл? **23.** Типĕ курăк пĕрлĕхĕ пĕр сăмахпа мĕн пулать? **24.** Тутана вистекен курăка мĕн теççĕ? **25.** Улăхри курăка ма çулаççĕ? **26.** Упасарри курăкне тепĕр тĕрлĕ мĕн теççĕ? **27.** Хĕрарăм йывăççи мĕн ятлă? **28.** Чатăр йывăççине мĕн теççĕ? **29.** Юман çулçи мĕнпе чирлет? **30.** Яшка курăкĕсем мĕн ятлă?

# К

## К. В. ИВАНОВ СĂВВИНЧЕН
## (Пуçватмăш)



Чăваш литературин классикĕ К. В. Иванов сăвăласа каланă сăмахсене мĕнле майпа вуламалла-ши?

# ҪАМ ҪЫРНӐ ҪАҪ ЙӖРҪЕСЕНЕ?
## (Викторина)

1. Сарӑ ыраш хумханать —
Чӑваш чунӗ савӑнать.

2. Ҫитмен пурнӑҫ пирки-ҫке
Ҫын кусӗнчен пӑхатпӑр.

3. Ҫӗлен ури пӗртте ҫук,
Ҫӗлен ҫитмен ҫӗр те ҫук.

4. Тӗрлӗ харам пырсене
Ёнсе ҫинчен пӑрахар.

5. Шурӑ кашкӑр ушкӑнӗ —
Ӗҫхалӑхӗн тӑшманӗ.

6. Таптаннӑ, хӑртаннӑ чӑваш ӗҫҫынни
Нумай ҫӗр ҫулсем хӑй пуҫне йӑтайман.

7. Чӗрере ачашшӑн ҫулӑмланса ҫунӗ
Тантӑшлӑх, тӑванлӑх, юрату кӑварӗ.

8. Ӗҫ алли тӑвать —
Тӗнче ҫӗнелет.

9. Пур ҫӗрте те савӑнӑҫ,
Пур ҫӗрте те чӗрӗлӗх!

10. Халӑх, халӑх тенӗрен
Хал ҫӗкленчӗ ҫӗнӗрен.

11. Пролетар чӗнсен — ман алӑ хӗҫ ҫинче...

12. Нумай эп сӑвӑ сӑвӑларӑм
Ҫӗршыв мухтав ӗҫӗ ҫинчен.

13. Тӗнче кӗвви —
Телей тӗвви —
Пуласлӑха пурне чӗнет.

14. Сӗмсӗр вилӗм ҫывхарсан,

Ăслăрах вилесчĕ ман.

15. Революци хушать çапăçма,
Революци ыйтать пулăшма.

16. Саккун тесе пире ташлатнă
Харам пырсен çатми çинче.

## ҪОММУНИЗМ — ҪУТĂ ҪУН, ҪАЛĂПЛАНАТЬ ПАЯН ҪУН
### (Викторина)

Астуса илĕр-ха, аяларах илсе кăтартнă ăслă сăмахсене камсем каланă?

1. Ҫоммунизм — пĕтĕм этемлĕхĕн чăн-чăн телейĕ.
2. Ҫоммунизм вăл — социализм аталанăвĕн çӳлти пусăмĕ.
3. Эпир коммунизмла ĕç çĕнтерĕвĕ патне пыратпăр...
4. Хут пĕлмен çĕршывра коммунизм тума çук.
5. Ҫоммунизм вăл — Совет влаçĕ тата пĕтĕм çĕршыва электрификацилени.
6. Ҫоммунизм — тĕнчен çамрăк кунĕ,
çамрăк йышăн ăна тумалла.
7. Ҫоммунизм хĕрлĕ ялавне
Чун тухиччен çĕре ӳкермен.
8. Пур çулсем те пирĕн ĕмĕрте
Ҫоммунизм патне илсе пыраççĕ.
9. Ҫоммунизмра кашни çын чунĕ
Яланах ырă ĕçшĕн çунĕ.
10. Ҫоммунизм тунă чух
Ҫирлĕ мир те юрату.

## КАЙӐКСЕН ПАТШИ
(Кулӑшла ыйту)



Ӑмӑрткайӑк — кӑш * патши,
Ӑмӑрт мӗнле вӗҫет-ши?

## КАЙӐК-КӖШӖК
(Ытарлӑх)

**1.** Акӑш шывран тухсан мӗн тӑвать? **2.** Ӑмӑрткайӑк мӗнле вӗҫет? **3.** Ӑсан тытма мӗн кирлӗ? **4.** Ӑсан тени хӑҫан ҫунатсӑр юлма пултарать? **5.** Ватӑ вӗҫен кайӑк шутне кама кӗртеҫҫӗ? **6.** Ватӑ куракпа ҫамрӑкки хушшинче мӗнле уйрӑмлӑх? **7.** Вӗҫен кайӑк ларнӑ турата хуҫине тӗкӗнмесӗр мӗнле майпа хуҫса илме пулать? **8.** Вӗҫен кайӑк мӗнпе тӑранса пурӑнать? **9.** Вӗҫен кайӑк

* Кӑш — авалхи тӗрӗк чӗлхинчен кӗнӗ сӑмах, «кайӑк» тени пулать.

патши мĕн ятлă? **10.** Ĕлĕкрен-авалтан камăн чӗлхи хисепре? **11.** Йывăçлăхри тухтăр мĕн ятлă? **12.** Курак вĕçсе килсен мĕн пулать? **13.** Мĕнле вĕçен кайăксем икшер ятпа пурăнаççĕ? **14.** Мĕнле вĕçен кайăк пуçĕнче ăс пур? **15.** Мĕнле вĕçен кайăк чĕппи амаçури патĕнче çитĕнет? **16.** Мĕнле вĕçен кайăк хысĕнче шыври чĕрчун пурăнать? **17.** Мĕнле вĕçен кайăк ячĕ типĕтнĕ курăкпа пуçланать? **18.** Мĕнле вĕçен кайăк ятĕнче тĕспе пыл çилĕмĕ пур? **19.** Мĕнле вĕçен кайăк кĕвĕ инструменчĕ çĕклесе çӳрет? **20.** Мĕнле вĕçен кайăк сенĕкне çумĕнчен хăвармасть? **21.** Мĕнле йăвара кайăк пулмасть? **22.** Мир кайăкĕ мĕн ятлă? **23.** Павра кайăк мĕн ятлă? **24.** Почта кайăкĕ мĕнле вĕçевçĕ? **25.** Çул шутлакан кайăк мĕн ятлă? **26.** Çунатлă сунарçă мĕнле вĕçен кайăк? **27.** Çунатлă хурах тесе мĕнле вĕçен кайăка ылханаççĕ? **28.** Çурт çĕмĕрсе кам çуралать? **29.** Çывăрас килсен тăманасем ăçта пырса лараççĕ? **30.** Çырла кайăкĕ мĕн ятлă? **31.** Тăрисене мĕнпе тытаççĕ? **32.** Тăрна майĕ мĕншĕн вăрăм? **33.** Тӳпе юрăçи мĕн ятлă? **34.** Тыллапуççи камшăн тăван кил? **35.** Уйăпа сăнарлă сăмахпа мĕн теççĕ? **36.** Утăк мĕнле утать? **37.** Флейта сассипе юрлакан вĕçен кайăк мĕн ятлă? **38.** Хыркук хыр йĕкелне ма сăхать? **39.** Чакак хӳри мĕншĕн вăрăм? **40.** Чăвашсем тĕве кайăкĕ тесе мĕнле чĕрчуна калаНă? **41.** «Чĕвĕлти чĕлхе» мĕнле вĕçен кайăк? **42.** Чĕкеç хăйĕн чĕлхине шăлĕпе çыртма пултарать-и? **43.** Шапа сыхчисем мĕнле вĕçен кайăксем? **44.** Шăнчас тени юр çусан юрлама пултарать-и? **45.** Шăплăхра мĕнле вĕçен кайăк çуралать? **46.** Шăхăрса юрлама кайăксенчен кам ăста? **47.** Шукăль кайăк мĕн ятлă? **48.** Шуçăмла юрлакан кайăка мĕн теççĕ? **49.** «Шыв вăкăрĕ» мĕнле вĕçен кайăк? **50.** Шыв çерçийĕ мĕнле вĕçевçĕ? **51.** «Ылтăн вĕçен кайăк» тесе кама ырлаççĕ? **52.** «Ютран килнĕ юрăç» тесе мĕнле вĕçен кайăка калаççĕ? **53.** Ял хуралçи мĕнле вĕçен кайăк? **54.** Япăх çĕр мĕнле вĕçен кайăк ятне куçма пултарать? **55.** Ясмăк кайăкне пĕр сăмахпа мĕнле калама пулать?

## ҪАПӐР ҪӐШ
(Ҫӑсӑк ыйту)



Ҫапӑр тумлӑ мӗнле ҫӑш?

## ҪАМСЕМ?
(Ытарлӑх)



Ҫалаçаççӗ Ҫараççем —
Ҫамсем иккен çав çынсем?

# КĂМПАСЕМ
## (Викторина)




Вăрман какайне — кăмпана — пурте кăмăлласçĕ, анчах та кăмпа çинчен пурте çителĕклĕ таран пĕлеймеççĕ. Кам, çак ӳкерчĕкри кăмпасене маларах палласа, кăмпа кĕлетки айĕнчи клеткăсем çине тĕрĕсрех çырса тухĕ?

## ĶĂМПА-ÇЫРЛА
### (Ыйтăвсем)

**1.** Ашлă калпак камăн пур? **2.** Вăрман какайĕ тесе мĕне калаççĕ? **3.** Вăрман кучченеçĕ мĕн ятлă? **4.** Кам шлепкеллĕ çуралать? **5.** Ķăмпа-çырла таврашне кам вырăнта типĕтет? **6.** Мĕнле çырла сивĕтиччен тăхтама хушать? **7.** Мĕнле чĕрчун шăна кăмпи çисе сипленет? **8.** Мĕнсĕр çырла татма çук? **9.** Мĕн шлепкине тăварласа çиеççĕ? **10.** Палан варринче мĕскер пур? **11.** «Пи» çумне мĕнле местоимени хушсан çырла пулать? **12.** Çĕр майăрĕ мĕнле çимĕç? **13.** Хĕллехи çырла мĕн ятлă? **14.** Хурăн çырлин хурăнташĕ мĕн ятлă? **15.** Шыв майăрне мĕн теççĕ? **16.** «Эп те тутлă çупалан!»— тесе мĕнле çырла мухтанать? **17.** Мĕнле çырласем пĕр-пĕринчен пĕр саспаллипе кăна уйрăлса тăраççĕ?

## ĶУНСЕМ
### (Шÿт)




Ķун хыçĕнче кун пулĕ,
Ķун вĕçĕнче мĕн пулĕ?

# Л

## ЛАША
## (Шӳт)



Пулас лаша мӗнрен паллӑ?

## МАКСИМ ГОРЬКИЙ — ПРОЛЕТАРИ ПИСАТЕЛĔ
### (Викторина)

**1.** «Горький»—писатель псевдонимĕ, унăн тĕп хушамачĕ мĕнле пулнă? **2.** А. М. Горький мĕнле хулара çуралнă, халь çав хула мĕн ятлă? **3.** Максим Горькин аслашшĕ мĕн ятлă тата мĕнле хушаматлă пулнă? **4.** Мĕнле произведенисенче М. Горький хăйĕн ачалăхĕпе çамрăклăхĕ çинчен çырса кăтартнă? 5. М. Горькин пичетре çапăнса тухнă чи малтанхи калавĕ мĕн ятлă? **6.** М. Горькин «Амăшĕ» ятлă романне 1906 çулта çырнă, çав çултах вăл тата мĕнле пысăк произведени пичетлесе кăларнă? **7.** «Амăшĕ» романти икĕ тĕп геройăн ятне, ашшĕ ятне тата хушаматне калăр-ха? **8.** А. М. Горькин «Амăшĕ» ятлă романĕнче сăнарланнă тĕп геройсен прототипĕсем * камсем пулнă? **9.** «Тăвăл хыпарçи» пĕрремĕш хут мĕнле журналта пичетленсе тухнă? **10.** М. Горький çырнă сакăр пьеса ятне аса илсе калăр-ха? **11.** Тинĕс умĕнче тăракан М. Горький портретне кам тунă? **12.** М. Горький çырнă мĕнле романсем тăрăх кинофильмсем ӳкерсе кăларнă? **13.** Максим Горькин çырса пĕтерейменроманĕ мĕн ятлă? **14.** Октябрьти социализмла аслă революци хыççăн М. Горький мĕнле романсем çырнă? **15.** Совет саманинче М. Горький мĕнле пьесăсем çырнă? **16.** А. М. Горький çинчен: ««Горький — чăннипех те пролетари искусствин питĕ пысăк представителĕ»,— тесе кам каланă?

---

* Прототип — илемлĕ произведенире сăнарланнă геройăн пурнăçра пулнă ашшĕ (тĕсетнĕ çынни).

## МАКСИМ ГОРЬКИЙ СĂМАХĔ
### (Шифрограмма)



Çак фигура çинче Максим Горькин «Тĕпĕнче» пьесинчен илнĕ сăмахсем çыраннă, мĕнле майпа çав сăмахсене вулама пулать-ши?

# П

## ПИРĔН ЕНТЕШСЕМ
### (Викторина)

**1.** Чăвашран тухнă паллă ученăй, китайсен йăх-аваллăхне тĕпчекен синолог. **2.** Чăвашсен паллă педагогĕ, чăваш культурин патриархĕ. **3.** Чăвашран тухнă малтанхи архитектор, профессионал-художник. **4.** Чăваш литературин классикĕ. **5.** Чăваш çĕршывĕнче çуралнă хĕрлĕ командир, граждан вăрçин геройĕ. **6.** Чăваш ăмăрткайăкĕ — Совет Союзĕн Геройĕ. **7.** Чăвашран тухнă ученăй, геодезист, çĕр чăмăрĕн виçипе формине тĕпчесе палăртаканĕ. **8.** Етĕрне вырăсĕ, чăваш чĕлхин 17 томлă словарьне хатĕрленĕ тюрколог. **9.** Чăвашсен паллă сăвăçĕ, кăвар чĕреллĕ революционер. **10.** Пирĕн ентеш, паллă ученăй, пысăк карапсем тумалли наукăна пуçарса яраканĕ. **11.** Чăваш литературин критикĕ, истори наукисен докторĕ, профессор. **12.** Пирĕн ентеш, Хасан кӳлли патĕнче çапăçса чапа тухнă Совет Союзĕн Геройĕ. **13.** Чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕ, çулăмлă революционер. **14.** Чăвашсен малтанхи пултаруллă композиторĕ, вăлах дирижер, драматург, сăвăç тата юрист. **15.** Чăваш халăхĕн кăйкăрĕ, виççĕмĕш космонавт. **16.** Паллă юрăç — «Чăваш çĕршывĕн Джамбулĕ». **17.** Чăваш композиторĕ, Государство премин лауреачĕ. **18.** Чăвашсен паллă филологĕ, чăваш чĕлхин этимологи словарьне çырса хатĕрленĕ ученăй. **19.** Шупашкарта çуралнă балерина, Гран-При премине илме тивĕçлĕ ташă ăсти. **20.** Чăваш государство университетĕнче ĕçлекен профессор, филологи наукисен докторĕ.

Ачасем, çак списока хăвăрах малалла тăсма пултаратăр.

## ПУРНĂÇРА ПУРРИ
### (Пуçпа уйламалли ыйту)



Акă сирĕн умăрта буквограмма, мĕн çырнă-ши çак буквограмма çине?

## П. П. ХУСАНКАЙ САВВИНЧЕН
(Буквограмма)



Çак фигура варринче чăваш халăх поэчĕ П. П. Хусанкай сăввинчен илнĕ йĕркесем вуланма тивĕç. Мĕнле сăмахсем-ши вĕсем?

## ПĔЛЎ КИРЛĔ!
### (Пуçватмăш)



Çакăнта вĕренекенсене кирлĕ сăмахсем çырăннă. Кам маларах вулама пултарĕ çав сăмахсене?

## ПУРНĂÇ — ТУЙĂМ
### (Ытарлăх)

**1.** Аван тени мĕн тени? **2.** Ăнăçлă пурăнма мĕн кирлĕ? **3.** Вырăнтан хускалмасăр ăçта путма пулать? **4.** Ĕмĕртен ĕмĕре мĕн куçать? **5.** Икĕ кĕске вăхăт пĕрлĕхĕ мĕн

пулать? **6.** Йывăр хуйха мĕн çĕклет? **7.** Қаçпулттипе мĕн килет? **8.** Қуçа курăнмасăр мĕн вăркать? **9.** Мĕн вĕçнĕ чухне çывăрма май çук? **10.** Мĕнле çулпа утмасăрах çӳреççĕ? **11.** Мĕнсĕр пурăнма май çук? **12.** Мĕн сурансăр ыратать? **13.** Пурнăç мĕнле аталанать? **14.** Пурнăç мĕнпе пуçланать? **15.** Пурнăç пурăнма мĕн кирлĕ? **16.** Пурнăç тĕрекне мĕн теççĕ? **17.** Пурнăç тума мĕн кирлĕ? **18.** Сутăнман пурлăх мĕн-ши вăл? **19.** Çемçерен те çемçе мĕн çемçе? **20.** Çулăмсăр-тĕтĕмсĕр мĕн çунать? **21.** Тĕнче тĕрекĕ мĕн ятлă? **22.** Тутлăран та тутлă мĕн тутлă? **23.** Хăçан тăмана куç харши çинче ларать?

## ПИРЕ ХАЛАЛЛАНĂ
### (Пуçватмăш)




Çак çаврашкасенче поляк писателĕ Юлиан Тувим сăввинчен илнĕ йĕркесене майлаштарса çырнă. Мĕн тесе çырнă-ши унта?

# Р

## РИФМĂЛАНĂ ЫЙТУСЕМ

Аслăрах çулхи ачасем кĕçĕн çулхи ачасене сăвă-юрă вĕрентме, халап-юмах каласа пама юратаççĕ. Нумай пĕлме кăсăкланакан ачасем ансатрах туптарусемпе ыйтусене те килĕштереççĕ. Çавна шута илсе, çак ушкăна çăмăлрах ытарлăхсене пĕрлештернĕ. Ытарлăхсен явапĕсене тупас тесен ыйту вĕçĕпе кĕвĕленекен сăмахсене (рифмăсене) тупма çеç хăнăхмалла.

1. Ана çинче мĕн ырă?
2. «А» саспалли мĕнле кăш?
3. Ачасемшĕн кам пример?
4. Вĕл вĕçет мĕнле пĕлĕш?
5. Вĕçев ăсти мĕнле хан?
6. Вырьăх çурма кам маçтăр?
7. Вертса канма мĕн аван?
8. Енлĕксемпе мĕн пуян?
9. Енлĕк тытма мĕн хапкăн?
10. Ик çунатлă мĕнле рак?
11. Йăран çинче мĕнле хан?
12. Қайăксенчен кам авка?
13. Қайăксенчен кам чĕлхеç?
14. Қам вăранать чи малтан?
15. Қам ĕçе ырлать сахал?
16. Қам канма шырать сăлтав?
17. Қам пăсăклать кăмăла?
18. Қам çулла «кĕтмен хăна»?

19. Ҫам тӳпере ҫӳревҫӗ?
20. Ҫам тӳпере чăн ватти?
21. Ҫам писевлет ӳт-пӗве?
22. Ҫам хăнапа пӗртăван?
23. Ҫам шывра ишет кал-кал?
24. Ҫам ыр тума кӗрӗшмен?
25. Ҫапăр тумлă мӗнле кăш?
26. Ҫашни килте мӗнле «рай»?
27. Ҫӗрӗк тума мӗн юрăх?
28. Ҫилкартинче кам лăркка?
29. Ҫилсеренех мӗн хура?
30. Ҫуллен кирлӗ мӗн тавар?
31. Ҫуҫ умӗнче мӗн ҫиҫет?
32. Лав сӗтӗрме кам хастар?
33. Ларса тăма мӗн ҫемҫе?
34. Мӗн илтет куллен хăлха?
35. Мӗн карăнать пит ансат?
36. Мӗнле йывăҫ пит аврăҫ?
37. Мӗнле йывăҫ чун уҫҫи?
38. Мӗнле кайăк атăпа?
39. Мӗнле кайăк пит йăркка?
40. Мӗнле кайăк пит чечен?
41. Мӗнле чӗрчун мăн пулă?
42. Мӗнле чӗрчун пит мăнтăр?
43. Мӗн ҫыхаҫҫӗ ҫăм чавса?
44. Мӗскер кирлӗ мунчара?
45. Мӗскер лайăх пул тытма?
46. Пуҫа ҫывăх мӗнле тус?
47. Садра ӳсет мӗнле хан?
48. Сăмса ҫинче кам пуҫлăх?
49. Ҫав тер ансат мӗн сăмах?

50. Ҫӗнӗ ҫулӑн кам хуҫи?
51. Ҫил ҫук чухне мӗн тикӗс?
52. Ҫул пуҫлать мӗнле пике?
53. Ҫул ҫӳреме мӗн паха?
54. Ҫутӑ парать мӗнле нар?
55. Ҫут тӗнчере мӗн пӗчӗк?
56. Ҫут тӗнчере мӗн ырлӑх?
57. Ҫын сывлӑхне мӗн ырлӑх?
58. Ҫын ҫумӗнче мӗн ҫӑмӑл?
59. Тӗнче касать кам ачи?
60. Тӳпе ҫинче мӗн ҫиҫӗ?
61. Тыр пуссинче мӗн хӑвӑл?
62. Уйран тума мӗн юрӑх?
63. Ут утланма мӗн чипер?
64. Хӑй йӑвинче кам патша?
65. Хӗлле питрен мӗн тивӗ?
66. Хӗл хӑни мӗнле пике?
67. Хир варринче мӗн ырӑ?
68. Чӑваш кунӗ мӗнле кун?
69. Чӑхра пур мӗнле кӗтес?
70. Чӑх-чӗпсемпе кам тӑван?
71. Чӗр курӑкпа мӗн тулӑх?
72. Чӗрчунсенчен кам вӑр-вар?
73. Чӗрчунсенчен кам тимлӗ?
74. Чун йӑпатма мӗн ырӑ?
75. Шиклӗхпеле кам пуян?
76. Шурлӑхсенче мӗскер лӑк?
77. Шутсӑр чее мӗнле тус?
78. Юрса ҫиме мӗн юрӑх?
79. Юхса тӑрать мӗнле куҫ?
80. Ялан ҫамрӑк кам ачи?

# РЕБУС



Ҫак ребус ҫинче чӑваш халӑх калашне ҫырнӑ. Кам маларах ӑна вулама пултарӗ?

# С

## САВАЛАНА ЫЙТУСЕМ

1. Автан тăрать аллă пус, автан хӳри миçе пус? 2. Ака тума çĕр кирлĕ, акнă тырра мĕн кирлĕ? 3. Ала кирлĕ аллама, алă кирлĕ мĕн тума? 4. Алăк тума а.ı(ă) кирлĕ, алăк уçма мĕн кирлĕ? 5. «А» пулать те «К» пулать, ака хыççăн мĕн пулать? 6. Валак тени пуçăн май, вăл мĕн пулать тепĕр май? 7. Вар тени васан пулать, васан тени мĕн пулать? 8. Вăрах тени вăртахла, вăл мĕн пулать урăхла? 9. Еккĕм евĕк курăнать, Еккĕм мĕнле пурăнать? 10. Икĕ айван вăй виçет, иккĕшне те кам çĕнет? 11. Қалаçнă чух ютпала калаçатăн кампала? 12. Қалăр-халĕ, авалтан кам сас парать чи малтан? 13. Қаппай тесе пуплетĕн — кама тĕксе илетĕн? 14. Қаçал * енчен каç килет, кахал этем мĕн ĕçлет? 15. Коля ларать пĕр пĕччен, кам пур «Қоля» çумĕнче? 16. Қуçа уçса кун куран, куçа хупса мĕн куран? 17. Малтан мала утнă чух, мĕнрен мала пулма çук? 18. Мечĕк Мĕтри аллинче, мĕн пур мечĕк варринче? 19. Микуç парсан пĕр çĕрĕ, миçе пулать мĕнпурĕ? 20. Пĕр çын утать йĕр пулать, пин çын утать мĕн пулать? 21. Пĕр шит çумне виçĕ шит, пĕрле миçе пулать-ши? 22. Пилĕк улма пилĕк пус, пин те икçĕр миçе пус? 23. Çавра йытă кил сыхлать, çав япала мĕн пулать? 24. Çавра кăна пĕр çĕрĕ, çав çĕрĕре миçе «ĕ»? 25. Çав-çав çĕрте палан пур, çав паланра мĕскер пур? 26. Çăмха тулли йĕп пулĕ, çав япала мĕн пулĕ? 27. Çĕлен шăвать çĕр çинче, çĕлен куçĕ мĕн çинче? 28. Çĕмĕрт-çĕмĕрт теетĕр, çĕмĕрт варри мĕн тетĕр? 29. Çитĕнсессĕн пулă вăл, çитĕниччен мĕскер вăл? 30. Çула тухсан çул куран, çул вĕçĕнче мĕн куран? 31. Çумкка ларать çурт çинче, çурчĕ ларать

---

* Қаçал — ял ячĕ, хальхи Қомсомольски.

мĕн çинче? **32.** Çуралсанах чĕпĕ вăл, çураличчен мĕскер вăл? **33.** Çын пурăнать çынпала, çынна мĕн тен урăхла? **34.** Таканара така пур, тата унта мĕнсем пур? **35.** Уй варринче васан пур, ун варринче мĕскер пур? **36.** Уй варринче купа пур, ун çумĕнче мĕскер пур? **37.** Ухă йĕппи, пит хăвăрт, унтан ытла мĕн хăвăрт? **38.** Халь тин шăтнă пултăран хăçан пулать май таран? **39.** Хăна килсен хур пиçет, хур пулмасан мĕн пиçет? **40.** Хулара, хупра, хурта — хуть хăçан та мĕн малта? **41.** Хура тĕслĕ саспалли хуçалăхра мĕн валли? **42.** Шăн ирĕлсен шыв пулать, шыв варринче мĕн пулать? **43.** Шĕветиччен турăх вăл, шĕветсессĕн мĕскер вăл? **44.** Шухăш килсен ирпеле шухăшлатăн мĕнпеле? **45.** Явлăкра, ямра, ялта — ялан пулать мĕн малта? **46.** Ялав вĕçет çиле май, ялав мĕскер тепĕр май?

## САСĂЛАТПĂР
## (Сăвăланă ыйту)



Сасăлатпăр кашни ир:
Савăнмашкăн кирлĕ...

## ÇĂМĂЛ ÇУНАТСЕМ
### (Чайнворд)



**1.** Пушхир вĕçен кайăкĕ. **2.** Ķилти кайăк. **3.** Америкăри страус. **4.** Хĕрлĕ пĕсехеллĕ вĕçен кайăк. **5.** Вăрманги чăпар вĕçен кайăк. **6.** Сивĕ енчи вĕçен кайăк. **7.** Ямшăк кайăкĕ. **8.** Вăрăм туналлă вĕçен кайăк. **9.** Çерçин тепĕр тĕрлĕ ячĕ. **10.** Туй тăвакан вĕçен кайăк. **11.** Вăрман

шуллийĕ. **12.** Ту чăххи. Тепĕр тĕрлĕ — ту кăрпатки (куропатка). **13.** Чĕп кăларман вĕçен кайăк. **14.** Çăхансен йышне кĕрекен вĕçен кайăк. **15.** Хĕл варринче чĕп кăларакан вĕçен кайăк. **16.** Çурт тăррине иленекен çунатлă тус. **17.** Шурлăх хуралçи. **18.** Илемлĕхпе савăш символĕ. **19.** Шывра ишекен вĕçен кайăк. **20.** Вĕçен кайăк патши. **21.** Ăшă енне вĕçсе кайман çунатлă тус. **22.** Африка аисчĕ. **23.** Ула тумлă улăхри тус. **24.** Кăйкăр йышши вĕçен кайăк. **25.** Çĕрлехи çунатлă сунарçă. **26.** Тинĕсри пысăк вĕçен кайăк. **27.** Шурă тĕклĕ вĕçен кайăк, шурă тăрна. **28.** Хурчăка йышĕнчи вĕçен кайăк. **29.** Вĕçен кайăк, шыв-шур тусĕ. **30.** Индирен килнĕ килти кайăк. **31.** Фазан йышне кĕрекен вĕçен кайăк (пинкуç). **32.** Юрлама юратакан вĕçен кайăк. **33.** Çуран çӳреме юратакан вĕçен кайăк. **34.** Шăхăрса юрлакан çурхи вĕçен кайăк. **35.** Чакăлтатма юратакан шавлă вĕçен кайăк.

## ÇĔРШЫВ ТĔРЕКĔ
## (Ытарлăх)




Çак ӳкерчĕк çинче ĕçлĕх çинчен калана сăваплă сăмахсене мĕнле вуламалла-ши?

## ÇĔРШЫВ — ХАЛĂХ
### (Ытарлăх)

**1.** Айван пуçĕнче мĕн пур? **2.** Айван хăçан ăслă çын пек курăнма пултарать? **3.** Амăшĕн чĕри ăçта тесе пĕлеççĕ? **4.** Аннӳн йăмăкĕн йыснăшĕ саншăн кам пулать? **5.** Ачалăх йăвине мĕн теççĕ? **6.** Ача мĕнсĕр çитĕнмест? **7.** Ача мĕншĕн ачаш пулать? **8.** Ача мĕншĕн йĕрет? **9.** Ача хыçĕнче мĕн пур? **10.** Кам кĕлтуса пурăнать? **11.** Кам лашине кӳлмесĕрех хуп турттарать? **12.** Мăнтăр çынна мĕншĕн самăр теççĕ? **13.** Мĕне хăвăнтан уйăрма май килмест? **14.** Мĕнсĕр халăх çине тухма çук? **15.** Тăпрапа шĕвĕ япала пĕрлĕхĕ мĕн пулать? **16.** Уйăхпа хĕвел хăçан пӳрте кĕреççĕ? **17.** Халăх хушшинче мĕн курма пулать? **18.** Хăюллă çын тесе кама калаççĕ? **19.** Чун тени хăçан хытма пултарать? **20.** Шăлсене тутапа хуплаймасăр çӳресен мĕн теççĕ? **21.** Ылтăнпа кĕмĕл тесе камсене калаççĕ? **22.** Этем мĕншĕн ĕнсине хыçать? **23.** Этемрен вилсен те мĕн хăпмасть? **24.** Этем ӳчĕ çумне мĕн çывăх? **25.** Этем чунне мĕн витме пултарать? **26.** Этем хăçан виçĕ уралла пулать? **27.** Юлхав этем мĕн тума юрататать? **28.** Якут тенĕ сăмах мĕнпе ытарлă?

## ÇИПУÇ — ТУМТИР
### (Ытарлăх)

**1.** Авалхи тум мĕн тесе пĕлетĕр? **2.** Амасăр тум мĕн пулнă? **3.** Қамăн тумĕ пин татăк? **4.** Қамăн тумĕ хывăнмасть? **5.** Кĕпе-тумтир мĕнсĕр çĕленмест? **6.** Кутăнла та, пуçăнла та мĕн ăшă? **7.** Мĕнле чĕрчун пилĕкрен явăнса çӳрет? **8.** Мĕнле тум хисеп ячĕпе пуçланать? **9.** Пĕр тăлăпран мĕн ăшăрах? **10.** Пусма-тавар таврашне мĕншĕн сутăн илеççĕ? **11.** Пысăк йĕрлĕ калуша мĕн тенĕ? **12.** Çĕлĕк мĕншĕн çĕтĕлет? **13.** Çĕнĕ кĕпен çĕнĕ саплăкне мĕн теççĕ? **14.** Тăвăр атă ма урана хĕсет?

**15.** Тум туянма мĕн кирлĕ? **16.** Тутăр варринче мĕн тупма пулать? **17.** Урари кăçатă хăçан çунать? **18.** Халăх çине мĕнсĕр тухма çук? **19.** Хăçан урара икĕ хут тир пулать? **20.** Чăвашăн чаплă тумĕ мĕн пулнă? **21.** Чăваш хĕрĕн тумĕнче вырăс чĕлхинчен кĕнĕ мĕнле икĕ местоимени пулнă? **22.** Чăваш халăхĕ мĕнле çынна кĕрнеклĕ тенĕ? **23.** «Ю» çумне мĕн хушса вуласан тум ячĕ пулать? **24.** Ялккас тенине ăçта курма пулать?

## ÇУЛА ТУХСАН
### (Шӳт)



*Макар утать малалла —*
*Ма пăхать вăл каялла?*

# ÇĔР ЫЙТУРАН ПĔРИ
## (Задача)



Çĕр ыйтуран пĕри пуç ватса уйламасăр шутланмасть пулĕ. Çак тăваткал çинчи ӳкерчĕксене, формипе те пĕр пек туса, икĕ пая пайламалла. Çав пайланă пайсенче пĕр пекки нимĕн те пулмалла мар, урăхларах каласан — пайланă пайсенче мăшăрсенчен пĕри кăна пулмалла. Мĕнле тумалла-ши çакна?

## ÇУХАЛНĂ РИФМĂСЕМ
### (Туптару)

Çак ушкăна пĕрлештернĕ калашсемпе тенешсен * рифмисене юриех палăртман (сиктерсе хăварнă), вĕсене çухалнă тесен те юрать. Сирĕн çав çухалнă рифмăсене тупас пулать. Çак ăс-хал ĕçне кам маларах тата тĕрĕсрех тума пултарĕ?

1. Алла усса ларнă чух, алла ырлăх...
2. Ăнăçтарса ĕçлекен — ăмăртура...
3. Вăхăт иртет вăраххăн выляс пулсан...
4. Вĕреннине мĕн çитет, вĕренекен...
5. Ĕçре тĕлсĕр павракан — ĕç вăхăтне...
6. Йĕрсессĕн те кашни çул йĕкĕр телей...
7. Кахал этем кахалах, канма пăхать...
8. Мал ĕмĕтпе пурнакан — малтан мала...
9. Наянпала кахала намăспала...
10. Пултаруллă пионер пур ачашăн та...
11. Пĕр çын утать — йĕр пулать, пин çын утать—...
12. Сăмах паман — хытма пĕл, сăмах патăн —...
13. Çын пуçĕпе пурнакан — çырма тĕпне...
14. Тăрăшнине мĕн çитет — тăрăшакан...
15. Тимлĕ этем — тимĕр пек, тимсĕр этем —...
16. Ула хĕрлĕ пулас çук, ултав чăна...
17. Хăлатпала шурă хур хăçан туслă...
18. Халăха ыр тăвакан хăй те ырлăх...
19. Чарак çĕтнĕ çăвара чакак йăва...
20. Чăн та ырă кĕреке чунпа çырнă...
21. Чĕлхи çинче — пыл та çу, чĕри çинче —...
22. Чĕлхи çинче — сарă пыл, чĕри çинче —...
23. Шур çăмартан çĕвви çук, шуратмасăр...
24. Шав шӳтлесе кулмалла шыв хумханса...
25. Ылтăн хĕвел çутинче ытарма çук...

* Калашсемпе тенешсем — пословицы и поговорки.

26. Элем * паллă тĕсĕпе, этем паллă ...
27. Юратуллă ыр чĕре юрлă мар ...
28. Юман çирĕп пулмалла, юлташ маттур ...
29. Ют кăмăла юрасси — юртан шерпет ...
30. Япăхтарса ĕçлекен — ятне пăсса ...
31. Ялан яту пулнă чух ялти ватă...
32. Яш вăхăтра яш пек пул, яш пек пул та ...

## ÇУНАТЛĂ СĂМАХСЕМ
### (Викторина)




Паллă çынсем каланă паха сăмахсемпе час-часах хамăр калаçура усă куратпăр. Вĕсене сăнарлăн «çунатлă сăмахсем» теççĕ. Çак шута акă мĕнсем кĕреççĕ:

* Элем — авалхи чăвашсен вăрçă ялавĕ.

афоризмсем, ӑслӑ каланӑ сӑмахсем, фразӑсем, цитатӑсем. Ӳкерчӗк ҫинче хӑшпӗр ҫунатлӑ сӑмахсене илсе кӑтартнӑ. Ҫам каланӑ-ши ҫав вырӑнлӑ сӑмахсене?

## ҪЫВӐХ ҪЫНСЕМ
### (Шӳт)



Ҫывӑх ҫынна тӑван теҫҫӗ, тӑван пекех ҫывӑх ҫынна тус теҫҫӗ. Авалах та мар, паянах та мар, пӗрне-пӗри тӑван пекех ҫывӑх курса, икӗ ҫамрӑк пурӑннӑ. Вӗсен кӑмӑлӗсем савӑк пулнӑ, чунӗсем хаваслӑ пулнӑ, тӗл пулсанах сар хӗвел пек йӑл кулнӑ. Пӗррехинче ҫаксем питӗ хытӑ хирӗҫсе каяҫҫӗ те халиччен те килӗшӳ тупаймаҫҫӗ. Ҫак икӗ туса ӗлӗкхи пекех илемлӗн култарас тесен мӗн тумалла-ши?

# ÇЫВĂХ ТУС
## (Çавра ыйту)

Ахаль мар каланă ёçлĕ халăх —
Ķашни çыннăн тусĕ пулмалла:
Тусу пултăр хăвăнтан та лайăх,
Утма çăмăл пулĕ малалла.

Тус пулсан умра çиçет хаваслăх,
Эс ăна кана пĕлми шыра.
Тус пулсан умра çиçет хаваслăх,
Ырă пурнăр çирĕп туслăхра.

Çывăхран та çывăх тус пур манăн,
Питĕ хисеплетĕп эп ăна.
Эп унпа пурнатăп пĕр тăванăн,
Яланах вăл маншăн ыр хăна.

Ăс хуранĕ унăн питĕ тарăн,
Пурнăçра кӳрет вăл ăнăçу.
Вăл тĕнче ăс-хакăлне пуçтарнă,
Вăл пĕлсе тăман ăсталăх çук.

Час-часах унпа эп канашлатăп,
Ман алран тухмасть вăл пĕрре те.
Пĕлменни пулсан — унран ыйтатăп,
Ķуллен-кун мана вăл вĕрентет.

Ķуллен-кун кӳрет вăл пысăк усă,
Унпа çеç пулатăн пĕлекен.
Чăннипех те чаплă манăн тусăм,
Ун хисеплĕ ячĕ —... *

---

* Нумай пăнчă вырăнне «çывăх тусăн» ятне калас пулать.

## ÇЫРАВÇĂ СĂМАХĔСЕМ
### (Пуçватмăш)



Ӳкерчĕкĕн аял вĕçĕнче кăтартнă уçкăпа* усă курса, М. Ф. Федоров çырнă «Арçури» ятлă балладăран илнĕ сăмахсене вулăр.

---

* Уçкă — çăраççи, çăра уçмалли хатĕр.

## ÇЫРСА ХУНИ
## (Çырулл̆ ыйту)



Мĕлке çине пăхатăр —
Мĕнле сăмах вулатăр?

## ÇЫРУ — ЧĔЛХЕ
## (Ытарлăх)

**1.** Арабла вуласан «ăвăс» тени мĕн пулать? **2.** «А» саспалли ăçта нумай? **3.** «Ă» çумне местоимени хушсан мĕнле вĕçен кайăк пулмалла? **4.** Ăс-хал кайăкне мĕн теççĕ? **5.** Валак хăçан вуланма пултарать? **6.** Вĕçерĕнсен мĕн тыттармасть? **7.** Грамматикăри мĕнле термин çĕр айĕнче тĕл пулать? **8.** Кайăкпа местоимени пĕрлĕхĕ мĕнле çимĕç пулать? **9.** Калав мĕнпе вĕçленет? **10.** Каласу мĕнле пуçланать? **11.** Каласу мĕнпе пуçланать? **12.** Кашни килте мĕн нумай? **13.** Мĕнле глагол, кутăнла вуласан, вăхăта пĕлтерет? **14.** Мĕнле местоимени, тепĕр майлă вуласан, хĕрхенӳ сăмахĕ пулать? **15.** Мĕнле саспалли местоимени вырăнне çӳрет? **16.** Мĕнле сас-

паллипе анатри чăвашсем усă курмаççĕ. **17.** Мĕнле сăмах пĕртен-пĕр саспаллипе тулса ларнă? **18.** Мĕнле сăмахра «а» саспалли сакăр хутчен тĕл пулать? **19.** Мĕнле чĕлхе вутра çунать? **20.** Наука чĕлхи тесе мĕнле чĕлхене калаççĕ? **21.** Пит хĕрелет мĕн пирки? **22.** Саспаллисен йăви мĕн ятлă? **23.** Сăмах мĕн вăл? **24.** Сăмах хăçан çунатланма пултарать? **25.** Çавра сăмах калама мĕн кирлĕ? **26.** Çилçунат тени мĕнле чĕрчун пулать-ши? **27.** Çунатлă урхамах кампа туслă? **28.** Çур саспаллипе мĕнле хуралтă туса лартма пулать? **29.** Çынпа калаçма мĕн кирлĕ? **30.** Çынпа çын хушшинче мĕнле çăмăл пур? **31.** Çыру ăсти пулма мĕн кирлĕ? **32.** Çыру мĕнле вĕçленет? **33.** Тăхлан саспаллипе шахмат фигури хушшине «а» саспалли вырнаçтарсан мĕн пулать? **34.** Чĕлхе мĕншĕн пĕрре? **35.** Чĕлхе мĕншĕн çивчĕ? **36.** Чĕлхе мĕншĕн хĕсĕкре? **37.** Чĕлхепе ăçта çитме май килмест? **38.** Чĕмсĕр пулни хăçан ылтăн? **39.** Шăмă карта хыçĕнче кам шăмарса юмахлать? **40.** Эпиграмма тени мĕнле вуланать? **41.** Ют чĕлхепе çырнă çырусене мĕнле вулаççĕ? **42.** Японире пурăнакан монгол çынни мĕнле чĕлхепе калаçать?

# Т

## ТАВЛĂ ЫЙТУСЕМ

Каламасăрах паллă, ыйтусем тĕрлĕрен пулма пултараççĕ, çак шутах тавлă ыйтусем те кĕреççĕ. Тавлă ыйтусем, е тавлаштаракан ыйтусем, ытарлăхсен шутнех кĕреççĕ. Уйрăмлăхĕ мĕнре? Ыйтăвĕ пĕрре, отвечĕсем иккĕ е виççĕ пулас пулсан, вĕсене «Тавлă ыйтусем» тетпĕр. Вĕсем çамрăк ачасем хушшинче, уйрăммăнах шкул ачисем хушшинче питĕ анлă сарăлнă. Тепĕр чухне вĕсем «Ан тавлаш!» ятпа та çӳреççĕ. Кун пек ĕçпе эпир те асапланса курнă. Пирĕн шкулта Ахван Ваççи пурччĕ. Вăл пĕр-пĕр ача умне пырса тăратчĕ те тӳрех:

— Ку тӳме камăн?— тесе тӳмерен ярса тытатчĕ. «Манăн» е «хамăн» тесе хуравлас пулсан, çак Ваçça тумтир тӳмине çăлса кăларатчĕ те: «Ме, хăвăн пулсан пуçтарса хур!»— тесе алăран тыттаратчĕ. Мĕнлерех каласан та пирĕнех, кĕçĕнрех ачасен, тӳме татăлмалла пулса тухатчĕ. Каярах ăнлантăмăр вара, ун пек чухне «ку вырăнлă тӳме» е «ку хăй вырăнне юрăхлă тӳме» тесе каламалла пулнă иккен. Çапла майпа эпир тавлă ыйтусем çине тĕрĕс хуравлама вĕренсе çитрĕмĕр. «Искусство çухатусăр пулмасть» тени пирĕншĕн çакă пулчĕ. Тата тепĕр тĕслĕх:

— Вĕçтĕркен мĕнпе вĕçленет?

Калас пулать, тавлă ыйтусенче те, ытти ыйтусенчи пекех, чи малтан сăмах мĕн çинчен пынине ăнкарса илес пулать. Çак тĕслĕхре ыйту паракан сăмах мĕн çинчен пынине палăртман, ăна хăвăнах чухласа илес пулать те çавăн çинчен хуравланă чухне палăртса пымалла. Унсăр пуçне, тавлă ыйту çине ик тĕрлĕ те, виç тĕрлĕ те хуравлама сăлтавĕ пур тейĕпĕр, тата çав ответсем пурте тĕрĕсе килеççĕ. Илсе кăтартнă тĕслĕх çине икĕ тĕрлĕ хуравлама май пур:

1. «Вĕçтĕркен» сăмах «кен» сыпăкпа вĕçленет.

2. «Вĕçтĕркен» сăмах «н» саспаллипе вĕçленет.

Тавлă ыйтура, çĕнтересех тесен, вариантсем çинчен те малтанах чухлас пулать, вара вĕсене пĕрлештерсе хуравламалла.

Тата тепĕр хут пусăмласа калассăм пур: ыйту паракан нихăçан та калаçу мĕн çинчен пынине палăртма тăрăшмасть, пачах та урăхла — вылякансене тĕп йĕр çинчен пăрса яма тăрăшать. Çакна тума вăл ултавлă сăмахсемпе те усă курма пултарать.

Çак кĕнекере тавлă ыйтусене уйрăм ушкăна пухса калăпламан, вĕсем ытти ыйтусемпе пĕрлех тĕл пулаççĕ. Вĕсене хăвăрах тупса палăртма пултаратăр, вĕсем пурте икĕ-виçĕ явaплă. Пĕлӳ — вăй, теççĕ вырăссем. Ăспа тата пĕлӳпе хĕçпăшаллансан кирек мĕнле йывăрлăхран та çĕнтерӳçĕ пулса тухма пулать.

Каланă сăмахсене çирĕплетме тата икĕ-виçĕ тĕслĕх илсе пăхăпăр.

Аслăк хыçĕнче мĕн пур? (Аслăк хыçĕнче тем те пулма пултарать, апла пулсан, калаçу аслăк çинчен мар, «аслăк» тенĕ сăмах çинчен пырать. «Аслăк» сăмах хыçĕнче «к» саспалли е «лăк» сыпăк пур.)

Вăтăр мĕнпе вĕçленет? Кунта калаçу вăтăр — 30 — хисеп çинчен те, «вăтăр» тенĕ сăмах çинчен те пыма пултарать. Хуравланă чухне çакна палăртас пулать. Икĕ ответ мар, икĕ тĕрлĕ ответсем килсе тухаççĕ:

1. Вăтăр тенĕ хисеп нульпе вĕçленет. 2. «Вăтăр» тенĕ сăмах «ăтăр» ячĕпе, «р» саспаллипе е «тăр» сыпăкпа вĕçленме пултарать.

Пионер умĕнче мĕн пур? (Паллах, пионер умĕнче хĕрлĕ галстук пур. Ăна пурте пĕлеççĕ. Çавăнпа та калаçу пионер çинчен мар, «пионер» тенĕ сăмах çинчен пырать. Ыйтăва çапларах ансатласан та, виçĕ тĕрлĕ хуравлама пулать иккен: «Пионер» сăмах умĕнче «п» саспаллипе «пион» чечек ячĕ тата «пи» тесе ят панă математика терминĕ пулма пултарать. «Пи» çинчен пурте пĕлмеççĕ, çавăнпа та ун çинчен аслăрах классенче вĕренекен ачасемпе кăна калаçмалла.)

Чӗлхе мӗншӗн пӗрре кӑна? (Ҫалаҫу кунта сӑмах тӑвакан орган ҫинчен кӑна пыма пултарать. Ҫапах та вариантсем пур иккен. Халӑхра ҫак ыйту ҫине икӗ тӗрлӗ хуравлаҫҫӗ: 1. Икӗ усал пӗр йӑвара пурӑнма пултараймаҫҫӗ. 2. Ҫӑварта тӑвӑр пуласран.)

Янрак мӗнпе вӗҫленет? (Ҫалаҫу кунта сасӑ тепӗр хут янраса илтӗнни ҫинчен мар, «янрак» тенӗ сӑмах ҫинчен пулма тивӗҫлӗ. Ҫакна ҫирӗплетсе ҫапларах хуравлас пулать: «Янрак» тенӗ сӑмах «к» саспаллипе тата шыври чӗрчун ячӗпе вӗҫленет.)

## ТАҪТАЛЛА
## (Шӳт)



Пӑхас пулсан таҫталла
Пӑхса тӑран ӑҫталла?

## ТАВЛĂ ТАКА
### (Шӳт)



Тавçăсем, мĕн тесе пĕлетĕр такана?

## ТĔНЧЕ — УÇЛĂХ
### (Ытарлăх)

**1.** Авалхи аслăк мĕн ятлă? **2.** Авалхи мăн куркана мĕн теççĕ? **3.** Алăпа туман ала мĕн япала? **4.** Асамат кĕперĕ мĕнсĕр пулмасть? **5.** Ачалăхран кам тухаймасть? **6.** Ăçтан тухать çавраçил? **7.** Вăйлăран та вăйлă мĕн вăйлă? **8.** Қамăн çулĕ капăр тӳпере? **9.** Қам каштасăрюпасăр кĕпер хывма пултарать? **10.** Қаçхи хĕвеле мĕн теççĕ? **11.** Қĕвĕ каламасăр ташлаттарма кам ăста? **12.** Мĕне çӳлелле тăратса хума çук? **13.** Мĕне хăваласа çитме май килмест? **14.** Мĕнле алтăра алла тытса курма çук? **15.** Мĕнле пулăмăн вĕçĕ те, хĕрри те çук? **16.** Мĕнле кĕпер тĕрлĕ тĕспе сăрланать? **17.** Мĕнле çул-

па никам та утса курман? **18.** Мĕнле çул çинче нихăçан та йĕр юлмасть? **19.** Мĕнле тӳпере пачах та çăлтăрсем пулмаççĕ? **20.** Мĕнрен никам та тарса хăтăлаймасть? **21.** Мĕнсĕр мĕлке çуралмасть? **22.** Мĕнсĕр юханшывсем пулмаççĕ? **23.** Нумайран та нумай мĕн нумай? **24.** Çĕр çумĕнчен мĕскер хăпăнмасть? **25.** Çӳллĕрен те çӳллĕ мĕн çӳллĕ? **26.** Хĕл ваттине мĕн теççĕ? **27.** Хĕл мучин кĕперне мĕн теççĕ? **28.** Ылтăн çутлăх тесе мĕне калаççĕ? **29.** Янкăр вăййи мĕн ятлă?

## ТĔЛĔНТЕРМĔШ ПУЛĂ
(Задача)



Çак пулăра мĕнле тĕрĕсмарлăх куратăр?

## ТИНĔССЕМ
**(Викторина)**

**1.** Мĕнле тинĕс тĕнчере чи пысăкки? **2.** Мĕнле тинĕс тĕнчере чи пĕчĕкки? **3.** Мĕнле тинĕсе пĕр юханшыв та юхса кĕмест тата мĕн пирки? **4.** Мĕнле тинĕссем тĕнчере чи сиввисем? **5.** Мĕнле тинĕс тĕнчере чи ăшши? **6.** Мĕнле

тинĕс тĕнчере чи тăварли? **7.** Мĕнле тинĕс тĕнчере пулăпа чи пуянни? **8.** Мĕнле тинĕсе кӳлĕ теççĕ тата мĕншĕн? **9.** Çĕр çинче шыв тĕсне кура ят панă тинĕссем те сахал мар. Мĕн ятлă тинĕссем вĕсем? **10.** Совет Союзĕ миçе тинĕспе чикĕленсе тăрать тата вĕсем мĕн ятлă? **11.** Совет Союзĕн çыранĕсене çăвакан тинĕссенчен чи пысăкки мĕн ятлă? **12.** Совет Союзĕн çыранĕсене çăвакан тинĕссенчен чи пĕчĕкки мĕн ятлă? **13.** Мĕнле тинĕс хĕрринче курортсем нумай? **14.** Пионерсен пĕтĕм Союзри кану вырăнĕ мĕнле тинĕс хĕррине вырнаçнă? **15.** Мĕнле тинĕс тĕпĕнчен нефть кăлараççĕ? **16.** М. Горький хăйĕн «Кăйкăр çинчен хунă юррине» мĕнле тинĕс хĕрринче çырнă? **17.** Çеçпĕл Мишши хăйĕн «Тинĕсе» ятлă сăввине мĕнле тинĕс хĕрринче çырнă? **18.** Мĕнле тинĕс çинчен питĕ нумай сăвă-юрă çырнă?

## ТĔНЧЕ ТУЛЛИ
## (Шӳт)



Кам кулли тĕнче тулли?

## ТИНĔС КУРНИ
### (Шӳтлĕ задача)



Çамрăк туристсем, ăшă кунсем çитсен, похода кайнă. Вĕсем пĕр илемлĕ кун тинĕс хĕррине çитсе тухнă. Çав пысăк шыв мĕнле тинĕс-ши?

## ТУПТАРУСЕМ
### (Кроссворд)

Ку — хăйне майлă кроссворд. Ана тăвас тесен, малтанах туптарусен тупсăмне тупмалла, вара çав тупнă сăмаха номерленĕ клеткăсем çине çырса хумалла.




**Горизонтальпе: 3.** Тул енчен хура вăл, шал енчен йĕпе вăл. **6.** Пуçĕ пур та — çÿçĕ çук, çăварĕ пур та — сасси çук. **7.** Яка çăмлă курăнать, ялан шывра пул тытать. **9.** Хăрах уран тăранçă, хыçран сăхма пăханçă. **12.** Тухас пулсан çăвартан, тыттарас çук нихăçан. **14.** Ула тĕслĕ пулать вăл, урайĕнче выртать вăл. **15.** Çипрен тунă япала çÿрет чăпар ятпала. **16.** Ĕлĕксенче кирлĕскер, ĕçлĕхрен халь тухнăскер. **18.** Куçик майри пурăнать, куçран пăхса макăртать. **20.** Куллен-кунах килет вăл, килсе сĕмлĕх кÿрет вăл. **22.** Каç та, ир те ахăрать, кăвак тесе мухтанать. **23.** Вăрманпала туслăскер, вĕçме çунат тупнăскер. **24.** Апат тесен апат мар, апат унсăр тутлă мар. **Вертикальпе: 1.** Селĕм апат тенĕскер, сĕт вĕретсе тунăскер. **2.** Пурте ăна мухтаççĕ, пылак тесе ырлаççĕ. **4.** Пире ялан кирлĕскер, питĕ-питĕ шăллăскер. **5.** Пуклак енĕ шĕлепке, пуклак марри — шĕвĕркке. **8.** Йывăр тесен — йывăр мар, йăтса илме çăмăл мар. **10.** Чунли çулпа чуптарать, чунсăр хыççăн хăвалать. **11.** Кутăн май та чавалать, пуçăн май та чавалать. **13.** Йăлăм енче ÿснĕ вăл, йывăç тирĕ пулнă вăл. **14.** Кĕçĕн пике кĕмĕлĕ кĕçех çĕре ÿкеслĕ. **17.** Хĕсĕк

çĕрте пурăнать, хĕрлĕ çип пек курăнать. **19.** Улах çĕрте хула пур, унта ĕçчен халăх пур. **20.** Ķăнтăр енне яланах кайса килет çуранах. **21.** Масар çинче пурăнать, мулла пекех çухăрать.

## ТУПТАРУ
### (Ребус)




Çак ӳкерчĕкри çаврашкасем çинче халăх хушшинче çӳрекен туптару ребусланса çыраннă, туптару тупсăмĕ те çак ӳкерчĕк çинчех. Мĕнле туптару-ши вăл?

# У

## УЙĂМЛĂ СĂМАХСЕМ
(Задача)




Çакăнта аслă пахчаçă тата çутçанталăк тĕпчевçи И. В. Мичурин каланă сăмахсем çырăннă. Мĕнле сăмахсем-ши вĕсем?

## УЛĂХРИ УТĂК
(Шӳт)



Уй варринче утăк пур,
Ун умĕнче мĕскер пур?

## УЙ-ХИР — ТЫРПУЛ
(Ытарлăх)

**1.** Авăнмасăр ăçта кĕме çук? **2.** Ана мĕнсĕр пулас çук? **3.** Ана тăмлă пулсан, мĕн пулать? **4.** Ăçта çитсен уй-хир вĕçленет? **5.** Вăйлă тырпул ăçта çитĕнет? **6.** Вăрăсăр кантăра мĕн теççĕ? **7.** Вĕçен кайăк курнă пĕрчĕ мĕншĕн шăтса тухаймасть? **8.** Енчĕклĕ нухрат мĕн тени пулать? **9.** Йĕпхӳ çунă вăхăтра йĕтĕн пуçĕ мĕн тăвать? **10.** Калча çинче мĕн ытлашши? **11.** Камăн амăшĕ ачинчен çуралать? **12.** Кĕсел тыррине мĕн темелле? **13.** Куç ани

çинче мĕнле тырă çитĕнет? **14.** Мĕнле пăрçа акма юрăхсăр? **15.** Мĕнле пучах каçăр ларать? **16.** Мĕнле тинĕсре ылтăн хумсем чупаççĕ? **17.** Мĕнле туллăн хура сăн? **18.** Мĕнле тулă шывра ӳсет? **19.** Тинкĕле тыррине мĕн теççĕ? **20.** Тислĕке мĕншĕн çĕр теççĕ? **21.** Тыр выракан этем мĕн тăвать? **22.** Уй-хир инженерĕ тесе кама калаççĕ? **23.** Улăм ури мĕншĕн утаймасть? **24.** Урпана хăçан сăваççĕ? **25.** Хирти тырă хăçан пурлăх пулать? **26.** Хура тĕслĕ пăрçана мĕн теççĕ? **27.** Ыраш мĕншĕн шăркана ларать? **28.** Ыраш тени мĕншĕн тĕрĕс мар пек туйăнать? **29.** Ыраш чечекне мĕн теççĕ?

## ӲКРĔН ПУЛСАН
## (Ыталлăх)



Ӳкрĕн пулсан месерле,
Ӳкрĕм тетĕн мĕнпеле?

# X

## ХАЛĂХ ХАВАЛĔ
### (Пуçватмăш)



Халăх хавалне кăтартса паракан сăмахсем хĕвел çаврашки çине çырăннă. Мĕнле-рех вуламалла-ши вĕсене?

## ХАТĔР-ХĔТĔР
### (Ытарлăх)

**1.** Ала ăсталама мĕн кирлĕ? **2.** Ăскăч тума мĕн кирлĕ? **3.** Вăрăм вĕрен мĕнпе вĕçленет? **4.** Витре хăçан илемлĕхе пĕлтерет? **5.** Ёненме хушнă сăмаха мĕн теççĕ? **6.** Йĕке çĕрри мĕнле япала? **7.** Қасса татнă вĕрен вĕçĕ ăçтарах пулать? **8.** Қăвас чĕресне мĕншĕн пуян тесе пĕлеççĕ? **9.** «Қăра кун» мĕнле ĕç хатĕрĕ пулма пултарать? **10.** Лум тени хăçан пурлăха çаврăнать? **11.** Мăн хутаç тени тепĕр тĕрлĕ мĕн пулать? **12.** Мĕнле ĕç хатĕрĕ кутăнла та, пуçăнла та пĕр пекех вуланать? **13.** Мĕнле маччана вырăнтан хускалмасăр тĕкĕнме пулать? **14.** Мĕнле миххе тăратса лартма май çук? **15.** Мĕнле çурласем тырă вырма юрăхсăр? **16.** Мĕнле хуран нихăçан та тутăхмасть? **17.** Мĕнсĕр çӳпçе тума çук? **18.** Пӳрнери çĕрĕ варринче мĕн пур? **19.** Сак таврашĕ мĕнсĕр пулмасть? **20.** Тимĕр вĕрен мĕн ятлă? **21.** Тин тунă арчара мĕн нумай? **22.** Урлă пуртă мĕн-ши вăл? **23.** Хурана хăçан вут çине çакаççĕ? **24.** Чăланти арчана мĕншĕн уçса пăхаççĕ? **25.** Шетник таврашĕ мĕншĕн юхать? **26.** Ярапа мĕскерпе вĕçленет?

# ХУТЛĂ ШУТЛАВ
## (Шӳтле вăйă)



Ку ӳкерчĕкре виçĕ тĕрлĕ чĕрчунсем: шăшисем, лĕпĕшсем тата кăвакарчăнсем. Çак ушкăнра миçе шăши, миçе лĕпĕш тата миçе кăвакарчăн пуррине шутласа тухмалла. Анчах та шутласса хăйне уйрăм йĕркепе шутлас пулать. Шутлав йĕрки çакăн пек: çӳлти сылтăм кĕтесрен пуçласа пур чĕрчунсене те йĕркипе, пĕр сиктермесĕр шутласа пымалла. Акă çапла: 1-мĕш шăши,

1-мĕш лĕпĕш, 1-мĕш кăвакарчăн, 2-мĕш шăши, 2-мĕш кăвакарчăн, 2-мĕш лĕпĕш, 2-мĕш кăвакарчăн, 3-мĕш лĕпĕш, 3-мĕш шăши, 4-мĕш кăвакарчăн тата малалла та çавăн пек.

Тытăнса пăхăр-ха, миçене çитиччен тĕрĕс шутлама пултаратăр?

## ХУТЛАВ — ШУТЛАВ
### (Ытарлăх)

**1.** Ача пĕррере пулсан, миçере пулать? **2.** Вунă хăрах миçе пулать? **3.** Вунă хут вуннă çурри миçе пулма пултарать? **4.** Икĕ саккăр, вунулттă, хăрах тăххăр, пĕр пиллĕк — миçе пулать мĕнпурĕ? **5.** «Қалав» сăмахран миçе сăмах тума пулать? **6.** Қĕрекере миçе «ре»? **7.** Кунпа кун хушшинче миçе кун? **8.** Куракăн миçе ура? **9.** Қурăклă вырăн пултăр тесен мĕн чухлĕ «н» саспалли илмелле? **10.** Миçе пĕр саспалли илсен тараса пулать? **11.** Миçе «чĕ» илсен пӳлме пурлăхĕ пулать? **12.** Мунчара миçе тĕрлĕ савăт-сапа пулма пултарать? **13.** Пĕр лимонран икĕ теçетке лимон хăçан пулать? **14.** Пĕр çăмарта вунă пус, çĕр çăмарта миçе пус? **15.** Пулă çурă пус çурă, вунă пулă миçе пус? **16.** Стакана миçе çăмарта кĕрет? **17.** «Çавра» тени мĕнле хисеп? **18.** Çавра тинĕс варринче çавра утрав пур, çав утрав çинче уртăш йывăççи пур, çав йывăç çинче утмăл ултă турат пур. утмăл ултă турат çинче икшер улма * пур — пурĕ миçе улма-ши? **19.** «Ут» сăмахра миçе тĕрлĕ сăмах пур? **20.** Хурапусри суратăн миçе ура? **21.** Чĕрере миçе «ре»? **22.** Этемĕн икĕ алă, икĕ алă çурри миçе пулать? **23.** Юхма хĕрринче кушак çурчĕ ларать, çав çуртăн тăвата кĕтес, кашни кĕтесре пĕрер кушак, кашни кушак умĕнче виçшер кушак — пурĕ миçе кушак-ши? **24.** Ялавăр миçе сăмах пĕрлĕхĕ?

---

* Улма — йывăç улми, тепĕр тĕрлĕ — панулми, çĕрулми мар.

# Ч

## ЧĂВАШ ЧĔЛХИ
### (Цифрограмма)

28.24.1.29
26.1.14.2.26
28.8.14.26.11
22.8.19.8.13
28.8.14.26.11
12.32.29.8.16.28.11
28.11 1.4.1.14.26.11
28.8.14.26.7.20.7.16.2.7.16
18.8.19.11 4.2.14 2.7.15.11.21.7
18.11.16 21.23.14 8.14.8.13.19.7.26
12.8.19.13.7.14.7.16.16.8

Çак ӳкерчĕкре чăваш чĕлхи çинчен чăвашсен паллă историкĕ тата литература критикĕ И. Д. Кузнецов каланă сăмахсене вулăр.

## ЧĔРЧУН — ĔРЧУН
### (Ыйтарлăх)

**1.** Авăн кайăкĕ мĕнле чĕрчун? **2.** Арăслана ăçта ирĕккĕн курма пулать? **3.** Ăçтине пĕлсен мĕнле чĕрчун пулать-ши? **4.** Ăтăр ятлă чĕрчуна хăçан хисеплеççĕ? **5.** Бегемот кам сăнарлă? **6.** Вăрăм йĕплĕ чĕрчуна мĕн теççĕ? **7.** Вăрман мулкачи ăçта çывăрать? **8.** Виçĕ теçеткелĕх-

ре мĕнле чĕрчун ячĕ пур? **9.** Вырăнтан хускалман чĕрчунсем ăçта? **10.** Гиппопотам кампа çывăх хурăнташ? **11.** Енлĕк килĕ мĕнле вырăн? **12.** Жираф мăйĕ мĕншĕн вăрăм? **13.** Инкеке лексен мĕнле чĕрчун хĕрелет? **14.** Икĕ саспаллирен кăна тăракан мĕнле виçĕ чĕрчун пур? **15.** Йăрăм тирлĕ лашана мĕн теççĕ? **16.** Йĕплĕ кĕрĕк кам пĕркенет? **17.** Йытăран таракан тилĕ ма каялла çаврăнса пăхать? **18.** Қапкăнри кашкăр ма вĕçерĕнсе тарать? **19.** Қашкăра мĕн тăрантарать? **20.** Қашкăр миçе ятпа пурăнать? **21.** Қуяна курсан мĕншĕн кулма пăхаççĕ? **22.** Қуян мĕншĕн кулянать? **23.** Лупашкара мĕнле чĕрчун пурăнать? **24.** Маччара мĕнле пысăк чĕрчун пур? **25.** Мăйăр камшăн шăл çемми? **26.** Мăркаллă кушак мĕнле чĕрчун? **27.** Қамăн хăлхи чĕркуççи çинче? **28.** Мăнттай чĕрчун мĕн ятлă? **29.** Мăн чĕрĕпе (вăрăм йĕплĕ чĕрĕпе) мĕн теççĕ? **30.** Мăн шапан тĕп ячĕ мĕнле-ши? **31.** Мĕнле чĕрĕ чун килĕнчен тухмасăр çул çӳрет? **32.** Мĕнле чĕрĕ чун пирки «чунĕ чул хушшинче» тесе калама пулать? **33.** Мĕнле чĕрчун парăмлă пӳртре пурăнать? **34.** Мĕнле чĕрчун пуçĕ çинче турат йăтса çӳрет? **35.** Мĕнле чĕрчун пуçĕ çинче сухапуç купташки йăтса çӳрет? **36.** Мĕнле чĕрчун çуралсанах ват сăнлă? **37.** Мĕнле чĕрчун çăварĕпе çип арлать? **38.** Мĕнле чĕрчун хаччипеле хăмсарать? **39.** Мĕнле чĕрчун ура лаппи çуласа хĕл каçать? **40.** Мĕнле чĕрчун утар ватма ухата? **41.** Мĕнле чĕрчун ячĕ поэзи сăмахĕпе пуçланать? **42.** Нӳрлĕ саспалли мĕнле чĕрчун пулас пек? **43.** Параппанçă тесе мĕнле чĕрчуна калаççĕ? **44.** Пултаруллă чĕрчунсене ăçта курма пулать? **45.** Пушхир карапĕ мĕнле чĕрчун? **46.** Пушхир крокодилĕ мĕнле чĕрчун? **47.** Пушхир тилли мĕнле чĕрчун? **48.** Ракăн çывăх хурăнташĕ мĕн ятлă? **49.** Суккăр сунарçă мĕнле чĕрчун? **50.** Сухати камăн хушма хушамачĕ? **51.** Çамрăк шапа мĕн ятлă? **52.** Çара çерçи хăйне мĕнле чĕрчун тесе шутлать? **53.** Çурçĕр урхамахĕ тесе мĕнле чĕрчуна калаççĕ? **54.** Çырма пĕвелекен чĕрчуна мĕн теççĕ? **55.** Тĕве мăйĕ мĕншĕн кукăр? **56.** Тĕнчери чи пысăк чĕр-

чун мĕн ятлă? **57.** Тукмак камăн псевдонимĕ *? **58.** Хир мулкачи мĕн туса ĕмĕрне irrтерет? **59.** Хутаçра ÿсекен мăн чĕрчуна мĕн теççĕ? **60.** Хутаçлă чĕрчунсем ăçта пурăнаççĕ? **61.** Хÿре сутакан чĕрчуна мĕн теççĕ? **62.** Хÿрипе сăхакан чĕрчун мĕн ятлă? **63.** Чапрас ураллă чĕрчуна мĕн теççĕ? **64.** Чăн пысăк çĕлене ятран мĕнле калаççĕ? **65.** Чи хаклă тир хуçи мĕн ятлă? **66.** Чунсăр чĕрчунсене мĕн теççĕ? **67.** Чурăс ашак мĕнле чĕрчун? **68.** Чурăс сысна пĕр вĕçĕм мĕншĕн чупса çÿрет? **69.** Шывра та, çĕр çинче те, сывлăшра та мĕнле чĕрчун пит пысăк? **70.** Юн ĕçес килнĕрен кам юрлать? **71.** Юн сăхакан шыв чĕрчунне мĕн теççĕ? **72.** «Явăл хÿри» мĕнле чĕрчун пулать-ши?

## ЧĔЛХЕ ЛАЙĂХ ПĔЛЕКЕН — ЧĔРЕРЕ ВУТ ЧĔРТЕКЕН

### (Викторина)

**1.** Чĕлхе вăл — пĕр-пĕринпе хутшăнмалли хатĕр... **2.** Сăмахпа çынсен чĕрине хĕмлентер! **3.** Усал чĕлхесем пăшалтан хăрушрах... **4.** Чĕлхе тасалăхĕшĕн, тĕрĕс пĕлтерĕшĕшĕн кĕрешни вăл культура хатĕрĕшĕн кĕрешни пулать. **5.** Чĕлхе мĕн тери ансатрах, мĕн тери сăпайлăрах, эпир çавăн чухлĕ ытларах ăнланатпăр. **6.** Чĕлхе тĕпченĕçемĕн çăмăл. **7.** Чăваш чĕлхи, чăваш чĕлхи, хĕвел кăварĕпе вутлан! **8.** Тапранăр, тимленĕр, чĕлхе ăстисем... **9.** Чĕлхесем пĕр-пĕрне вăйлатса, пуйтарса пыраççĕ. **10.** Ирĕклентĕр, çирĕплентĕр чăваш чĕлхи! **11.** Аннерен вĕреннĕ чĕлхене çын манма пултараймасть. **12.** Халăх чĕлхине хисеплени вăл тăван халăха хисеплени пулать. **13.** Тăван чĕлхе такамшăн та ырă. **14.** Тăван чĕлхе улмуççине шăвар вăй пур таран. **15.** Чĕлхесĕр çын — чăлах. **16.** Чăваш чĕлхи, ĕлĕк унăн çырулăхĕ пулман пулсан та, пуян чĕлхе.

---

* Псевдоним — вăрттăн хушамат е ят, вĕсемпе ытларах писательсем усă кураççĕ.

## ЧĔРЧУН ЧИТЛĔХĔ
(Пуçватмăш)



Акă сирĕн умăрта чĕрчун читлĕхĕ е, тепĕр майлă, чĕрчунсен сăнарĕсем. Мĕнле чĕрчунсем вырнаçнă-ши кунта?

## ЧĔРЧУНСЕНЕ МĂШĂРĂН ÇЫХĂНТАРĂР
### (Задача)

Художник çак страницăра вунпĕр мăшăр тĕрлĕрен чĕрчунсене ӳкерсе хунă. Хуçкаланчăк линисемпе усă курса çак мăшăрсене пĕрлештерес пулать. Мăшăрсене пĕрлештернĕ чух линисем пĕр-пĕрин урлă каçса каймалла мар. Çак ĕçе мĕнле тумалла?



## ШУПАШКАР
### (Шӳт)



Шупашкар варринче мĕскер пур?

## ШУРĂ ШУПАШКАР
### (Викторина)

**1.** Малтанхи хут Шупашкар çинчен хăçан тата мĕнле ĕçе пула летопиçре палăртса хăварнă? **2.** Шупашкара хăçан Мускав патшалăхĕн хули тесе официаллă йĕркепе пĕлтернĕ? **3.** Шупашкар хулинчи кремль çинчен мĕн пĕлетĕр? **4.** Хăçан Шупашкар хулинче чул çуртсем тума пуçланă? **5.** Шупашкарăн халичченех упранма пултарнă графикла пĕрремĕш контурне хăçан тунă пулнă? **6.** Шупашкар хулин ятарлă гербне хăçан туса хатĕрленĕ? **7.** Шупашкар хулин гербĕ çине кăвакалсем кӳртсе хунине мĕнлерех ăнлантарса каланă? **8.** Шупашкар

хулинче пурӑнакан арҫынсен йышӗ хӑш ҫулсенче ӳсӗм маччине ҫитнӗ тата хӑҫанччен ҫапла пулнӑ? **9.** Писатель-революционер А. Н. Радищев хӑҫан тата мӗнле майпа Шупашкара ҫитсе курнӑ. **10.** Аслӑ вырӑс поэчӗ А. С. Пушкин хӑҫан тата мӗнле майпа Шупашкарта пулнӑ? **11.** Украинӑн паллӑ писателӗ тата художникӗ Т. Г. Шевченко мӗнле майпа Шупашкара пырса лекнӗ? **12.** Шупашкар хулин хальхи гербне хӑҫан туса ҫирӗплетнӗ? **13.** «Чебоксарская правда» хаҫат хӑҫан туха пуҫланӑ? **14.** Хӑҫан Шупашкарта Совет влаҫӗ ҫирӗпленнӗ?

## ШЫВСЕМ-ШУРСЕМ
## (Ытарлӑх)

**1.** Авалхи шыв мӗнле пулнӑ? **2.** Атӑл ӑҫталла юхать? **3.** Атӑл кӗскелсен мӗн пулать? **4.** Атӑл тӗпӗнче мӗнле чулсем выртаҫҫӗ? **5.** Ҫӑвак ылтӑн тесе мӗне калаҫҫӗ? **6.** Кӗтнепе Шетмӗ варринче мӗн пур? **7.** Кӳлӗ хӑҫан вӑхӑт ятне ҫаврӑнать? **8.** Мӗнле шывра пачах та пулӑсем пулмаҫҫӗ? **9.** Мӗнле шыв тӑварсӑр пулать? **10.** Мӗнле юханшыва авалхи шыв теме пулать? **11.** Мӗнле юханшыв хӗрҫын ятне туяннӑ? **12.** Мӗнле юханшыв ятӗнче виҫӗ нота пур? **13.** Миҫе тӗслӗ тинӗс пур? **14.** Пӑла шывӗ мӗншӗн пӑлханса юхать? **15.** Пылак шыва мӗн теҫҫӗ? **16.** Ҫавал шывӗ мӗншӗн ҫаврӑнса юхать? **17.** Ҫырма тенӗ сӑмахра мӗнсем пур? **18.** Тинӗс мӗншӗн хумханать? **19.** Хура тинӗс мӗншӗн хурланать? **20.** Чарӑнмасӑр мӗн кӗрлет? **21.** Шыв тени вунӑ теҫеткене ҫитсен мӗн пулать? **22.** Шыв тӗкӗрӗ ҫине тумлам ӳксен мӗн пулать? **23.** Шыв хӑҫан шӗвеклӗхне ҫухатать? **24.** Шыв хӑҫан юпаланса тӑрать? **25.** Юханшыв мӗнсӗр пулмасть? **26.** Яшлӑх шывӗ ӑҫта юхать?

## ШӐТЛӖ ЫЙТУСЕМ
### (Ытарлăх)

**1.** Автомобилĕн чупнă чухне хăш кустăрми çаврăнмасть? **2.** Алапа хăçан шыв йăтма пулать? **3.** Аппаратсăр кино мĕн ятлă? **4.** Асатте тени ма тĕрĕс мар илтĕнет? **5.** Ăçталла ӳкме май килмест? **6.** Бегемотăн вăрттăн хушамачĕ мĕнле-ши? **7.** Вак укçана чăвашсем мĕн тенĕ? **8.** Вĕренпе пĕрене варринче мĕнсем пур? **9.** Зоопаркра миçе парк? **10.** Ирĕкре пурăнакан çын мĕншĕн ялан хĕсĕкре? **11.** Қайăк пырса ларнă йывăç туратне, кайăкне хăратмасăр, мĕнле хуçса илмелле? **12.** Қалаçу ăстине мĕн тăрантарать? **13.** Қатка-пичке мĕнсĕр пулмасть? **14.** Қлоун çине пăхса ма кулаççĕ? **15.** Қуç хăçан çухалма пултарать? **16.** Қуç хыçĕнче мĕскер пур? **17.** Лаххан хăçан сĕмсĕрленет. **18.** Лупашкара мĕнле чĕрчун тĕл пулать? **19.** Макар йĕрет акара, мĕскер пулнă Макара? **20.** Малтан мала утнă чухне ма каялла пăхаççĕ? **21.** «Мĕлке» тата «мĕтĕк» сăмахсене мĕнле çырмалла? **22.** Мĕнле икĕ саспалли ĕç хатĕрне пĕлтерет? **23.** Мĕнле король ĕмĕрне те калаçмасть? **24.** Мĕнле куçа кашни çулах шур илет? **25.** Мĕнле куçăн кĕскелĕхĕ пур? **26.** Мĕнле куç пăр çинче пулать? **27.** Мĕнле куç çулăмпа çунать? **28.** Мĕнле куç тарлама пултарать? **29.** Мĕнле кушак калаçма пултарать? **30.** Мĕнле кушак юлхав пулать? **31.** Мĕнле лаша çунатлă пулать? **32.** Мĕнле металл хăй çине тинкерме хушать? **33.** Мĕнле пулă чи лайăххи? **34.** Мĕнле слонсен куçĕсем çук? **35.** Мĕнле çĕлен йĕп куçĕнчен тухма пултарать? **36.** Мĕнле хисеп çинче ташлама та, туй тума та пулать? **37.** Мĕнле хуралт çĕрпе тан? **38.** Мĕнле хумсене куçпа курма çук? **39.** Мĕнле шăла шăл хушшине хураççĕ? **40.** Мĕнле ыйту çине майлă хуравлама май килмест? **41.** Мĕнпе мĕн хушшинче мĕскер пур? **42.** Мĕн тăрринче мĕн тăрать, мĕн тăрринче мĕн тăвать? **43.** Мĕн тума хушнине тĕптĕрĕс пурнăçлама май килмест? **44.** Мĕн ӳкнине курса тăма май килмест? **45.** Мĕншĕн мĕшĕлти çын хуллен

ёçлет? **46.** «Мĕшĕлти этем» тесе мĕнле çырмалла? **47.** Мухтама хушни çумне «Ç» саспалли хушсан мĕн пулать? **48.** «Мыскал» тесе çырсан мĕн пулать? **49.** Ним çимесĕр мĕнле чĕрчун пурӑнать? **50.** Носорог «чӑвашла» мĕнле сӑмах пулать? **51.** Палӑк варрине мĕн пытарнӑ? **52.** Патша тарçисем мĕншĕн хӑю çакса çӳренĕ? **53.** Пӑрçа хӑçан ташлама пуçлать? **54.** Пӑшалĕ çине çерçи пырса ларнӑ вӑхӑтра хуралçӑ мĕн тӑвать? **55.** Пулӑра, хирте, ялта — пур çĕрте те мĕн малта? **56.** Пучахра, пуçра, пырта — пур чухне те мĕн малта? **57.** Рак мĕнле сават-сапа хыçĕнче тĕл пулать? **58.** Сӑмавар хӑçан вĕреме кĕрет? **59.** Сӑмах, çӑвартан тухсан, ма тыттармасть? **60.** Сӑмса çине мĕн утланма юрататать? **61.** Сунарçӑ, пӑшал пенĕ вӑхӑтра, хӑрах куçне ма хупать? **62.** Çавра çĕррĕн мĕнĕ çук? **63.** Çамрӑк ачана мĕншĕн хĕртеççĕ? **64.** Çатма çумĕнче мĕн пур? **65.** «Ç» саспалли çумне вӑхӑт хушсан мĕн пулать? **66.** «Ç» çумне мухтама сĕнекен глагол хушсан мĕн пулать? **67.** Çын вӑрттӑнлӑхĕ çын патĕнче мĕншĕн вӑрах упранмасть? **68.** Талӑк мĕнпе вĕçленет? **69.** Тĕттĕм çĕре мĕскер хупса хума çук? **70.** «Тукӑн» тенĕ сӑмахран ыр ут мĕнле тумалла? **71.** Тумлам хӑçан сиксе ташлать? **72.** Уйӑх çине курӑк шӑтма пултарать-и? **73.** Ултав кунне хӑçан уявлаççĕ? **74.** «Хура çивĕт» мĕн тени пулать? **75.** Хура ылтӑн мĕн тени пулать? **76.** Хуралтпа хуралт хушшинче мĕскер пулма пултарать? **77.** Хур, хĕллехи сивĕре, мĕншĕн хӑрах ура çинче тӑрать? **78.** Чавсана мĕншĕн çыртма çук? **79.** Чатӑр айĕнче мĕн пур? **80.** Чухӑн çынсем, пурлӑх пухмасӑрах, хӑçан пуйма пултарнӑ? **81.** «Ш» саспалли йышлансан мĕн пулать? **82.** Ыйту паран — мĕн илен? **83.** Ыйхӑланӑ этем мĕн тӑвать? **84.** Элексей умĕнче мĕн пур? **85.** «Юр ма шурӑ?» тесе ыйтсан мĕн темелле? **86.** Яшка турӑхне мĕн теççĕ. **87.** Ящур мĕнпе ытарлӑ?

## ШӐРПЕ
## (Шӳтлӗ ыйту)



Шутласа пӑхас пулать:
Шӳрпе мӗншӗн пӑсланать?

## ШЫВА КӖРЕССИ
## (Шӳтлӗ мар ыйту)



Пӗр юхӑм шывне икӗ хутчен кӗме пулать-и?

# Ы

## ЫТАРЛĂ ЎКЕРЧĔК
(Пуçватмăш)




Мĕлке çине пăхатăр —
Мĕнле çыру вулатăр?

## ЫТАРЛĂ ÇЫРУСЕМ
(Задача)

Акă пуç çĕмĕрсе шутламалли задача. Кроссвордпа чайнвордри пекех, кунта мĕнле сăмах тупмаллине кĕскен ăнлантарса панă. Çав сăмахра миçе саспаллĭ пулмаллине те клетка туса палăртнă. Анчах та кунта мĕнле çырмаллин вăрттăнлăхне (ытарлăхне) пĕлмесĕр ăнăçлăх пуласса шанма çук. Сăмахран: пилĕк клетка

çине «авăрлă măн курка» тесе çырмалла пултăр. Тĕрĕс çырма мĕн кирлĕ? «Авăрлă măн курка» тесе каланă ытарлăхăн тупсăмне тупас пулать. Вăл та пулин — алтăр. Çу питĕ ансат тĕслĕх. Задачăри тĕслĕхсем йывăр та кăткăс. Çунта тĕрлĕрен те тĕрлĕ пăтăрмахсем пур.

Тупăшса пăхăр-ха, кам маларах çĕнтерĕ!

| | |
|---|---|
| 1 | Çуклăх палли |
| 2 | Тарăса |
| 3 | Плащ |
| 4 | Юман çырли |
| 5 | Кашăк йăви |
| 6 | Типĕ курăк |
| 7 | Кункăра |
| 8 | Сыпланă йывăç |
| 9 | Тӳрнĕтеслĕх |
| 10 | Питĕрĕнчĕк |
| 11 | Пĕлĕт пĕлĕшĕ |
| 12 | Иртнĕ кун |
| 13 | Шӳтлев |
| 14 | Серте тăванĕ |
| 15 | Хăрушлăх |
| 16 | Пĕрех |
| 17 | Вăрман çырли |
| 18 | Çывăх çын |
| 19 | Çитес кун |
| 20 | Çур теçетнен |
| 21 | Хурçи тĕрри |

## ЫТАРАЙМИ ЫТАРЛĂХ
## (Палиндромон)



Çамрăк туссем, калăр-ха,
Çак хайла мĕнпе паха?

## ЫТАРЛĂ ЫЙТУСЕМ

1. Алăра мĕн вĕреме пултарать? 2. Ăвăс тăрринче мĕнсем пур? 3. Вырăс ялĕ çумне шахмăт терминĕ хушăнсан мĕн пулать? 4. Ĕçре сӳрĕк çынна мĕн теççĕ? 5. Ĕлĕкрен-авалтан пасарсенче кам хуçа? 6. Йĕпхӳ çунă вăхăтра йĕлме йывăç мĕн тăвать? 7. Йытăпа сысна тиркенĕ курăка мĕн теççĕ? 8. Қама йывăç чĕлхеллĕ тесе йĕплеççĕ? 9. Қамăн чĕлхи тимĕр? 10. Қушак хăçан икĕ ураллă пулать? 11. Лум хăçан пурлăх пулма пултарать? 12. «Матак» тесе мĕне калаççĕ? 13. Мĕнле курăка куççăр çын та паллама пултарать? 14. Мĕнле сехет авăтма пултарать? 15. Мĕнле ыйту çине «çук» тесе хуравлама май çук? 16. Мĕнсĕр юрă хывма çук? 17. Мĕнсĕр юрă юрланмасть? 18. Музыка амăшне мĕн теççĕ? 19. Ним те хуман арчара мĕскер пулĕ пит нумай? 20. Пӳрт тăрринче мĕскер пур? 21. Пĕлтĕрхи юра

ăçта курма пулать-ши? **22.** Салтака мĕн ăшăтать? **23.** Сăмах тени хăçан çăвара кĕме пултарать? **24.** «Çăмарта» сăмаха мĕн пирки тиркеме пулать? **25.** Çултаlăкра пĕрре кама тумлантараççĕ? **26.** Çул ылмашнă вăхăтра мĕнле уяв пулать? **27.** Çурт çумĕнчи шур кишĕре мĕн теççĕ? **28.** Тайăлма хушнипе «Ҫ» саспалли мĕнле çимĕç пулаççĕ? **29.** Такана мĕн-ши вăл? **30.** Ташăра мĕн пур? **31.** Ташлама мĕн кирлĕ? **32.** Тĕс мĕнле ытарлăх пулать? **33.** Уйăхпа хĕвел мĕнле тĕкĕр çине пăхаççĕ? **34.** Укçа мĕншĕн хуçине палламасть? **35.** «Хăçан» тени хăçан вĕçме пултарать? **36.** Хăюллă çын тесе кама калаççĕ? **37.** Хĕвел мĕншĕн пурин çине те пĕр пекех пăхать? **38.** Хĕвелĕн ури мĕншĕн вăрăм? **39.** Хĕвел чечекĕ тесе мĕнле ӳсенлĕхе калаççĕ? **40.** Чĕлхене мĕншĕн шăлсем хыçне кăкарнă? **41.** Ыйту паракан мĕн парать? **42.** Ырçана мĕншĕн ырлаççĕ? **43.** «Ытарлă» тенĕ сăмах мĕнпе ытарлă? **44.** Ытарлă ыйтусем тăвасси мĕнле ĕç? **45.** Этемĕн этемлĕхĕ мĕнре? **46.** Юр хăçан хăлхана кĕме пултарать? **47.** Яваплăхран хăтăлма мĕн шыраççĕ? **48.** Явап тенĕ ятпала çӳрет вичĕ япала — çавсем мĕнле ятсем-ши? **49.** Ял тени хăçан музыкăра кирлĕ пулать? **50.** Янкăр вăйăйи мĕн ятлă?

# Ю

## ЮМАН
(Юмарт ыйту)



Ҫак юман ӑсти ҫӗршывра ӳсет-ши? Географи карттисенче куркаланӑ ҫын ҫак ыйтӑва часах татса пама пултарать. Сиртен кам маларах чухласа илӗ?

# Я

## ЯВАП
## (Явăк ыйту)




Яваплăр-ха йышпала:
Явап мĕскер япала?

## ЯЛСЕМ — ЯТСЕМ
## (Ытарлăх)

**1.** Алтай мĕн тесе пĕлетĕр? **2.** Аçа мар юханшыв мĕн ятлă? **3.** «Вак сум» * хăçан тĕп хула пулма пултарать? **4.** Ишекпе Ишлĕ хушшинче мĕн пур? **5.** «Ķ» çумне вăхăт ячĕ хушсан мĕнле ял пулать? **6.** Мĕнле хула-ял ячĕсем хисеплĕ пуçланаççĕ? **7.** Мĕнле ял ячĕ, кутăнла вуласан, чĕрчун ятне çаврăнать? **8.** Мĕнле яла самăр тесе пĕлеççĕ? **9.** Мĕнле ялсем тырăллă? **10.** Рим хули мĕнпе ытарлă? **11.** Тăрăн тăрринче мĕнсем тăраççĕ? **12.** Хулапа ял хушшинче мĕнле уйрăмлăх? **13.** Хурамал варринче мĕскер пур? **14.** Ял мĕнпе вĕçленет? **15.** Ял хуш-

* Сум — укçа, хаклăх.

шинче мĕскер пур? **16.** Акким мĕнле ятпа ылмашма пултарать? **17.** Валя ячĕ мĕнпе ытарлă? **18.** Çамăн ятĕнче икĕ тĕрлĕ ĕç хатĕрĕ пур? **19.** Çамăн ятне авалхи ят теме пулать? **20.** Çамăн ятĕнче нотăпа пуç пайĕ пур? **21.** Çамăн ячĕ вăрманта ӳсет? **22.** Çамăн ячĕ мăн шыва пĕлтерет? **23.** Çамăн ячĕ юхса выртма пултарать? **24.** Çарук хăçан çунат хушма пултарать? **25.** Çурма ĕмĕтленни хăçан ята çаврăнать? **26.** Мĕнле ятсем кутăнла та, пуçăнла та пĕр пекех вуланаççĕ? **27.** Микмик Микулай, Микулайăн мĕн нумай? **28.** Тимак ячĕ мĕнпе ытарлă? **29.** «Ы» саспаллипе мĕнле ятсем пуçланнă-ши? **30.** Якку ячĕ мĕнпе ытарлă? **31.** Ятман тени мĕне пĕлтерет?

## ЯТАРЛĂ ЯВАП
## (Ребус)




Çак шитти (щит) çинче Александр Невский каланă сăмахсене ребусласа çырнă. Вĕсем тăшмансемшĕн ятарлă явап пулса тăраççĕ. Мĕнле сăмах-ши вĕсем?

## ЯТУЛЛĂ УЯВРА
### (Кĕçĕннисемшĕн тунă ребус)

Ачасем Çĕнĕ çул уявне çав тери хапăл туса кĕтсе илеççĕ. Вăл вĕсемшĕн — ятуллă уяв. Малтанах чăрăш (ёлка) хатĕрлеççĕ, ăна пĕр-икĕ кун маларах тумлантараççĕ — теттесем çакса тултараççĕ. Укерчĕк çинче шăпах та çавăн пек тин çех капăрлатнă елка, анчах та ун çинчи теттесене тĕлли-паллисĕр çакса тухман, теттесем çакса ребус хатĕрленĕ.

Ачасем, çак ребуса кам маларах вулама пултарĕ? Мĕн çырнă-ши унта?



# ТУПСАМЕСЕМ

# А

## АВТАНСЕМ (ансат ыйту)

Çапăçакан автансене хут çине ÿкернĕ, çавăнпа вĕсем яланах çак мехелпе тăраççĕ.

## АВАЛХИ — ЁЛĔКХИ (ытарлăх)

1. Геродот — истори ашшĕ, теççĕ. 2. Музей. 3. Истори. 4. Çуралнă вырăнта. 5. Ҫил хушшинче. «Авалхи туссем» тесе выльăх-чĕрлĕхе калаççĕ. 6. Археологсем. 7. Ун чухне те, хальхи пекех, чĕрĕ пулă тытнă. 8. «Ёлĕк» тенĕ сăмах, кутăнла вуласан, «кĕлĕ» пулма пултарать. 9. Зоологи музейĕнче. 10. Ҫарăка. Ăслăхçăсем ăна авалхи кайăк теççĕ. 11. Упасаррине. Авалхи вăхăтра вĕсем йывăçла ÿсенлĕхсем пулнă. 12. Ҫамăн пуçĕ пысăк пулнă, çав тăханнă. 13. Нимĕнле ĕç те пулса иртмен, мĕншĕн тесен февраль уйăхĕнче ун пек кун пачах та çук. 14. Вĕсем иккĕш те пĕр çын ячĕсем. 15. Бронза ĕмĕрĕ пулнă, ылтăн ĕмĕр пулман. 16. Йытă. 17. Çĕр. Çĕр—планета е çĕр чăмăрĕ.

## АВТАН — ҪĂРҪКА (ытарлăх)

1. Авăтман автанăн ĕмĕрĕ кĕске пулнăран. 2. Сасси пуртан. 3. Инкеке лексен. Ҫунта «хур» тени «хурлăх» тенин пĕлтерет. 4. Тÿрлетме май çукран. 5. Автанăн. 6. Автан киккирикне тура тесе те калаççĕ. 7. Ҫăрккан. 8. Автанăн. 9. Автанăн. 10. Ури çĕре перĕнмен пирки. 11. Инкеке лексен. Ҫунта «хур»—хурлăх. 12. Ҫăркка хĕрлĕ тĕсе юратмасть, теççĕ. 13 Америка. Вĕсене индеецсем илентернĕ, çавăнпа та ăна вырăссем «индейка» теççĕ. 14. Цесарка. 15. Ярапа пур. 16. Сахăр автанĕ, урăхларах каласан, сахăртан пĕçерсе тунă автан. 17. Ҫăрккан. Унăн тепĕр тĕрлĕ ячĕ — пыркка. 18. Мускавра та, ытти çĕрти пекех, чăхсене 1, 2, 3... тесе сăваççĕ. Ҫунта «сăваççĕ» — шутлаççĕ. 19. Пăшал автанĕ. Чăвашсем курок тенине çавăн пек сăнарласа каланă. 20. Чăх кăтăклама, урăхла каласан, кăтăк тупса алхастарма

пĕлмест, вăл кăтиклет. 21. Çăмарта. 22. Сăрламан пирки. Пĕветсен шурă пулмасть. 23. Шыв çукки. 24. Шухă автан пуласси çăмартарах авăтать, теççĕ халăхра. 25. А.С. Пушкин юмахĕнче. 26. Автан.

## АПАТ-ÇИМĔÇ (ытарлăх)

1. Çăвара хыпса. (Çăвара хыпмасăр ним те çиме çук.) 2. Алăпа тытмасăр. 3. Çиес килнĕ вăхăтра. 4. Қам нумайрах пурăннă, çав аслă. 5. Çăвар кирлĕ. 6. Сивĕтмен пирки. 7. Қавлемесĕр çини — куçпа çини. Қирек мĕне те куçпа çиме пулатех. 8. Сухан çинине. 9. Пур чухне. 10. Ăс-хал çимĕçне. «Ăс-хал çимĕçĕ» тесе сăмахлă хайласене калаççĕ, пуринчен ытла — искусство произведенийĕсене. 11. Пăчкă кĕрпинчен. 12. Пăшăлти пăттине. 13. Пушă тирĕкрен. 14. Ыхра çинине. 15. Сĕт. Çу вăл — сĕтрен пулакан иккĕмĕшле çимĕç. 16. Çĕвви çук. 17. Çăкăр аслă, çавăнпа та çăкăрпа тăвара пусмаççĕ, çăкăр çине тăвар сапаççĕ. 18. Хыттисĕр. 19. Пăри. 20. Уйран. 21. Пиçсе çитсен. 22. Юсман. Юс ман — юсман. 23. Шăрши 24. Сивĕнсе çитмен пирки.

## АЙВАН ЫЙТУ (шӳт)

Арбузĕ хăй кирлĕ, унсăрăн арбуз çиме май çук.

## АҚТИВЛĂ ҚАНУ (буквограмма)

Қану вăл — ĕçе урăхлатни. (Вулав йĕрки: кунта саспаллисене юриех вăрăмлатса çырнă. Мĕн çырнине вулас тесен, хут листине куç тĕлне горизонталь майлă тытса, линисем тăрăх пăхас пулать.)

## А. С. ПУШҚИН САВВИСЕМ (викторина)

1. «Чаадаева» (сăвă), 1818. 2. «Пурнăç урапи» (сăвă), 1823. 3. «Ăрăмçă Олег çинчен хунă юрă», 1822. 4. «Ут» (сăвă), 1833. 5. «Пророк» (сăвă), 1826. 6. «Палăк» (сăвă), 1836. 7. «Ирĕклĕх» (ода), 1817. 8. «Русланпа Людмила» (поэма). 9. «Қапитан хĕрĕ» ятлă повесть умне çырса хунă эпиграф. 10. Ятсăр сăвă, 1830. 11. «Полтава» (поэма), 1832.

## А. С. ПУШКИН АСЛАХĔ (буквограмма)

Вулав — чăн лайăх вĕренӳ. (Çыру йĕрки: «В» саспаллинчен пуçласа, сехет йĕппи çаврăннă май, саспалли сиктерсе вулас пулать.)

# Ă

## АСЛĂ СĂМАХ (В. И. Ленин сăмахĕ)

Вĕренмелле, вĕренмелле татах та вĕренмелле. (Аслă сăмаха акă çапла вуламалла: малтан пĕрремĕш ретри пысăк, вăтам, пĕчĕк саспаллисене, унтан çав меслетпех ытти ретсенчи саспаллисене те вуласа пымалла).

## АСЛАХ — ПĔЛӲ (ытарлăх)

1. Хур шăмми. 2. Пурнăç шкулĕнче. 3. Библиотекăна. 4. «Пуç» тени пулать. П. П. Хусанкай сăмахĕ. 5. Пуçри ăспа. 6. Венгрла та, чăвашли пекех, сулахайран сылтăмалла вуламалла. 7. Глобус хăй тĕллĕн çаврăнмасть, ăна алă сулăмĕпе çаврăс пулать. 8. Кĕнеке. 9. План çинче. 10. Ас курать. 11. Алфавит. 12. Глобус. 13. Экватор унки. 14. Ахрăм (эхо). 15. Шăнкăрав сассипе. 16. «Урок» сăмах умĕнче уçă сасă илтĕнет. 17. Хăйĕн чĕлхипе. 18. Географи карттисем çинче. 19. Куçпа пăхса. 20. «Чăваш кĕнекине ĕне çинĕ» тесе ĕнентернĕ чиновниксем. 21. Французла вуланать, мĕншĕн тесен вăл француз сăмахĕ. Çав сăмах, чăвашла куçарсан, «пуплешӳ» тенине пĕлтерет. 22. «Иккĕ» паллăсем илсен. 23. Парта. 24. Контурлă карттăсем çинче.

## АÇТА ВĔСЕМ? (Авалхи ыйту)

Асчахсем ваза хĕррине вырнаçнă, вĕсен профилĕнчен ваза кĕлетки йĕркеленнĕ.

## АСЛĂ СĂМАХ (Карл Маркс сăмахĕ)

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр! (Вулав йĕрки: Аванрах сăнаса пăхсан, палăк пьедесталĕ çине çырнă сăмахсем

е пуçхĕрлĕ, е çырăнсах пĕтменнине курма пулать, вара кирлĕ сăмах çамăлах вуланать.)

# В

## ВĂХĂТ — ВИÇЕ (ытарлăх)

1. Кирек кăна ăçта çит, кив аршăнта тăват шит. Каярах, метрпа виçме тытăнсан, çав виçене «çĕнĕ аршăн» тенĕ. 2. Сехет. 3. Автан. Вăл, вăхăт çитсенех, авăтса ярать. 4. IV=4. 5. Вăхăт. 6. «Декабрь» вĕçĕнче çемçелĕх палли пур. Декабр+ь. 7. Вăхăтăн. 8. Февраль уйăхне. Унăн, ытти уйăхсемпе танлаштарсан, кунĕсем сахалтарах. 9. Иртнĕ кунăн çути çук, теççĕ халăхра. 10. Вăхăт. 11. Малтисен те, кайрисен те шучĕ çук. 12. Шутлă вăхăт. 13. Чĕрĕ «к». Чĕрĕк — виçе ячĕ. 14. Чаръннă сехет. 15. Ун пек хисеп — хĕрĕх. 16. Акă ун пек хисепсем: çĕр=100, миллион=1000000. 17. Вăхăт. 18. Икĕ «миçе» пулать. 19. Кун ячĕ пулать, анчах та ăна пĕлес тесен, каланă сăмаха кутăнла вулас пулать. Нуктамăш=шăматкун. 20. Иккĕшин те йывăрлăх виçисем пĕр пекех. Хăмлан кӳмеркки кăна пысăкрах. 21. Теçетке. 22. Чĕкеç. Чĕкеç килет — çу пуçлать, теççĕ халăхра. 23. Май. Ун ятĕнче мĕнпурĕ те виçĕ саспалли кăна. 24. Хура курак вĕçсе килет — çурхи вăхăт пуçланать, теççĕ. 25. Вăхăт. 26. Пĕрремĕш утăмпа. «Çухрăм» тенĕ сăмах «ç» саспаллипе е «çу» сыпăкпа пуçланать. 27. Тăватă сăмахран: алă, алăк, лăк, тал. Тал — хытă туналлă курăк е йывăç. 28. Икĕ тĕрлĕ калама пулать: «у» саспаллипе е «уй» сăмахпа. 29. Уйăх катăлмасть, уйăхри кун шучĕсем кăна катăлса-чакса пыраççĕ. 30. Укçа. 31. Ĕçленĕ чухне. 32. Самант. 33. Вăраткăç (будильник). 34. Ыйхăран вăраннипе. 35. Каç пулать. 36. Эрне кунĕ иккĕ тесе пĕлеççĕ: пĕри — вырăс эрнекунĕ, тепри — чăваш эрнекунĕ. 37. Тăватă тапхăра пайлаççĕ: ачалăх, яшлăх, арлăх, ватлăх. 38. Хĕвел. Вăхăта хĕвел тăрăх пĕлеççĕ.

## ВĂЛТАЙ ПУРККИ (шӳт)

Нимĕнле пулă та тытаймасть, мĕншĕн тесен вăл çекĕлĕ çине ăман тирмен.

## ВĂЛТА — ПУЛĂ (ытарлăх)

1. Целакант. Ун йышши пулăсем тахçанах вилсе пĕтнĕ. 2. «Вăлта» сăмах вĕçĕнче «а» саспалли пулать. 3. Килька, тюлька, хамса. Çырмари чи пĕчĕк пулă — ырашпăтри. 4. Пулăсен. 5. Сазан. 6. Белугăна. 7. Пулă сутнă çĕрте. «Кĕмĕл вăлта»— укçа. 8. Пулăсем пурте куç хупмасăр çывăраççĕ. 9. Кăртăша. 10. Çуйăн. 11. Çăл шывĕнче. 12. Карас текен пулла. 13. Аквариумра. 14. Пултарулăх кирлĕ, унсăрăн лекнĕ пулă та вĕçерĕнсе тарма пултарать. 15. Çăрттана. 16. Шўчке. 17. Акула. 18. «М» саспалли хушса вуласан. Ша+м+па-шампа. 19. Чĕрĕ пулă. 20. Аквариумра. 21. Шывра типĕ пулăсем пулма пултарайманççĕ. 22. Цепола. 23. Мăйхан (Мирун), сазан, çуйăн. 24. «Партас» тени вирелле вуласан «сатрап» пулать. 25. Ку ыйту пирки хăвăр асапланăр.

## ВĂЙЛĂ ВĂКĂР (шўт)

Вăкăрăн нимĕнле çилĕ те çук: «сĕт хутаççи (сĕт çилли) ĕнен кăна пулать, кăра çилĕ (çилленме пĕлесси) те унăн çук, унăн усаллăхĕ кăна пур.

## ВĂХĂТ ВАХТĔРĔ (задача)

Çак ўкерчĕк çинчи сехет, çўремест пулин те, талăкра икĕ хутчен тĕрĕс вăхăт кăтартма пултарать: пĕрре ирхине — тăххăр çурă çитеспе, тепре каçхине — татах тăххăр çурă çитеспе.

## В. И. ЛЕНИН УСĂ КУРНĂ (викторина)

1. Анчах çырли пиçмен-ха унăн... («Тилĕпе Виноград»)— В. И. Ленин, СТП, 4, 379; 7, 356; 17, 139; 25, 241; 34, 6 *.

2. Анчах та лавĕ вырăнтах ларать. («Акăш, Рак, Çăрттан»)— В. И. Ленин, СТП, 10, 195—196, II, 244.

3. Арчи çăмăлах уçăлать-мĕн. («Арча»)— В. И. Ленин, СТП, 17, 362.

---

* Кĕскетнине çапла вуламалла: В. И. Ленин, СТП (Сочиненисен тулли пуххи, 4 (том), 379 (стр.)...

4. Аса илтерĕ вăл Тимьянăн шӳрпине. («Тимьян шӳрпи») — В. И. Ленин, СТП, 10, 304, 311.

5. Ах, Моçка, пит вăйлă пулмалла. («Слонпа Моçка») — В. И. Ленин, СТП, 1, 141; 27, 233.

6. Ăсли сăмахпа мар, ĕçпе хастар! («Икĕ пичĕке») — В. И. Ленин, СТП, 5, 328.

7. Вара шыва яраççĕ Çăрттана. («Çăрттан») — В. И. Ленин, СТП, 1, 276; 24, 523; 25, 90.

8. Вĕренӳпе наукăна ятлать. («Юман айĕнчи сысна») — В. И. Ленин, СТП, 11, 315.

9. Кушак итленĕ — çинĕ апатне. («Кушакпа Повар») — В. И. Ленин, СТП, 1, 205.

10. Мĕнле-ха, çылăха мансах, Куккук мухтанă Автана? («Куккукпа Автан») — В. И. Ленин, СТП, 12, 276; 21, 212.

11. Миçе каланă тĕсетсе, «йăпăлтатни» пăсать тесе. («Тилĕпе Ула курак») — В. И. Ленин, СТП, 25, 211.

12. Мухтанчăкран кулаççĕ куласса, пайран та хăвармаççĕ-ха катса. («Сунарти Куян») — В. И. Ленин, СТП, 8, 197; 17, 50.

13. Пĕри те палламасть хăйне сатирăра. («Тĕкĕрпе Упăте») — В. И. Ленин, СТП, 5, 276.

14. Рим хулине Хурсем хăтарнă. («Хурсем») — В. И. Ленин, СТП, 16, 4; 33, 147—148.

15. Çапла пĕрмай хаклине тиркет тăмпай. («Автанпа мерчен пĕрчи») — В. И. Ленин, СТП, 14, 230.

16. Тришка сăхманне сапласси... («Тришка сăхманĕ») — В. И. Ленин, СТП, 17, 182; 19, 48—49.

17. Халь Арăслан йӳтенĕ пĕтĕмпех. Ашак та пырса тапнă. («Тилĕпе Ашак») — В. И. Ленин, СТП, 11, 211.

18. Шутланă ирттерме квартет. («Квартет») — В. И. Ленин, СТП, 21, 255; 24, 299, 349; 29, 41.

## ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ (ытарлăх)

1. Хăйĕн хăлхинчен. 2. Анчăкра пур шанчăк, теççĕ халăхра. 3. Алфавит йĕркипе пăхас пулсан, анчăк йытăран малта. 4. Апат çиекен кушак: «Вăрламан, вăрламан!» — тесе хуçа умĕнче тӳрре тухать. 5. Пахха. 6. Утă купи хăй патне утса пыман пирки. 7. Икĕ тĕрлĕ хуравлама пулать: «а» саспалли е «аш» сыпăк пур темелле. 8. Ашак тирне сӳсе ашăк тăвас пулсан. 9. Кутăнла вулас: ашак — Каша. 10. Кушак. 11. Качакана. Унăн сухалĕ пур. 12. Пони. 13. Малти урипе. 14. Ларма пĕлмен пирки. 15. «Ĕне» сăмах пуçламăшĕнче саспалли пур. «Ĕ» саспалли. 16. Шĕвĕ пулнăран. Турăх пек çăра е хытă пулнă пулсан ăна

çинĕ пулĕччĕç. 17. Ĕне сĕчĕ чĕлхинче, теççĕ. 18. Пукрас. 19. Кушак. 20. Кушак тата унăн тăванĕсем. (Кушак йышне кĕрекен чĕрчунсем). 21. Качака. 22. Саккăрмĕш çулне пурăнма тытăнать. 23. Качакана. Вăл яланах малта, кĕтӳ пуçĕнче çӳрет. 24. Кушака. 25. Шутне пĕлес тесе. Кунта «сăваççĕ»— шутлаççĕ тенине пĕлтерет. 26. Качака. 27. Апатсăр юлас мар тесе. Юмахçран. Юмахне те, пĕрремĕш хут çак сăмаха илтекен ачана каласа кăтартма юрать. 28. «Кушак» тенĕ сăмаха кутăн вуласан: кушак — Кашук (авалхи арçын ячĕ).
